24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 10 пус.

книжн пал

1941
ЯНВАРЬ
26
ВЫРСАРНИКУН
21 (5736) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ.

ИНФОРМАЦИЛЛӖ ПӖЛТЕРӲ

1941 ҫулти январӗн 24—25-мӗшсенче ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн черетлӗ V-мӗш Пленумӗ пулса иртрӗ.

Пленум ҫак ыйтусене сӳтсе-яврӗ:

1. 1940 ҫулти ялхуҫалӑх ӗҫӗсен итогӗсем тата ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшри задачӑсем.
2. Канаш тата Хӗрлӗ Чутай районӗсенче партиллӗ пропагандӑпа агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫ мӗнле тӑни ҫинчен.

Пленум ҫак ыйтусем тӑрӑх тивӗҫлӗ решенисем йышӑнчӗ.

ВКП(б) Пӗтӗм Союзри XVIII-мӗш конференцин делегачӗ пулма Пленум, пӗр саслӑн пулса, ВКП(б) Обкомӗн пӗрремӗш секретарьне **И. М. ЧАРЫКОВ** юлташа суйларӗ.

ВКП(б) ОБКОМӖ.

Ӗҫри ҫирӗп дисциплина— пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗн никӗсӗ

Ленин—Сталин партийӗпе Совет правительстви ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетсе пырас тӗлӗшпе ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ. Пур ӗҫре те дисциплина йӗркеленсе пыни социализмлӑ ҫӗршывӑн хуҫалӑх тӗрекне тата оборона хӑватне вӑйлатать. Пирӗн ҫӗршывра дисциплина социализмлӑ йӗркелӗхе организацилеме, ӗҫ тухӑҫлӑхне тӑтӑшах ӳстерсе пыма кирлӗ. Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ,—тет Ленин,—ҫӗнӗ обществӑллӑ строй ҫӗнтерес ӗҫре чи кирли, чи пахи пулса тӑрать.

Пирӗн ӗҫ тухӑҫлӑхне кашни кун, кашни сехетре хӑпартса пымалла. Ҫакна тума пирӗн кирлӗ условисем пурте пур. Рабочисем, служащисем, ӗҫсыннисем халӗ хӑйсемшӗн ӗҫлеҫҫӗ, хӑйсен государстви валли тӑрӑшаҫҫӗ. Социализмлӑ предприятисем тӗнчери чи малта пыракан, лайӑхран та лайӑх техникӑпа хӗҫпӑшалланнӑ. Сталинла пятилетка ҫулӗсенче ӗҫ кадрӗсем, стахановецсем, производство ӗҫӗнче малта пыракан ҫынсем йышлӑн ҫитӗнчӗҫ. Ҫаксем вӗсем—ӗҫ тухӑҫлӑхне улӑпла утӑмсемпе хӑватлӑн малалла аталантарса пымалли пит те паха условисем.

СССР Верховный Совет Президиумӗ июнӗн 26-мӗшӗнче йышӑннӑ Указ—ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме, предприятисен пӗтӗм ӗҫне вӑйлатма ҫӗнӗ майсем уҫса пачӗ. Вӑл Указ халӑхӑн вӑйӗсене организацилес тата мобилизацилес тӗлӗшпе пит те пысӑк вырӑнта тӑни пуриншӗн те паллӑ ӗнтӗ.

Указ тухнӑранпа ҫичӗ уйӑх ҫитет. Вӑл халӑхӑн кулленхи пурнӑҫӗпе йӑлине кӗчӗ. Унӑн результачӗсем хуҫалӑхӑн нумай енӗсенче пит те уҫҫӑн курӑнаҫҫӗ. Нумай предприятисенче ӗҫ дисциплини, ӗҫри йӗркелӗх ҫирӗпленсе пыни, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ тата ӗҫ пахалӑхӗ ӳссе пыни палӑрать. Чӑваш республикинчи промышленность наркомачӗсене пӑхӑнса тӑракан предприятисенче иртнӗ ҫулӑн малтанхи ҫурҫулӗнче прогул тӑвакансен хисепӗ пинрен те иртнӗ. Июнӗн 26-мӗшӗнче тухнӑ Указ хыҫҫӑн вӗсен хисепӗ виҫӗ хут ытла чакнӑ. Уйрӑм организацисем тӑрӑх илсен, ҫакӑн пек тӗслӗхсем курма пулать. Чӑвашшвейпромсоюз системине кӗрекен артельсенче иртнӗ ҫулти июль уйӑхӗнче 22 прогул пулнӑ. Август уйӑхӗнче 18, сентябрьте 7, октябрьте 7. ноябрьте 3 т. ыт. те. Сӗнтӗрвӑрринчи судоверфьра иртнӗ ҫулӑн малтанхи ҫурҫулӗнче 50 прогул пулнӑ пулсан, юлашки ҫурҫулта пӗр прогул кӑна пулнӑ. Енӗшпуҫӗнчи кирпӗч заводӗнче (Вӑрнар р.) иртнӗ ҫулӑн малтанхи ҫурҫулӗнче 88 прогул тунӑ пулсан, юлашки уйӑхсенче пӗрре те пулман.

Шупашкарти спирт заводӗнче Указа кӑларнӑранпа ӗҫ дисциплини лайӑхланса пыни уҫҫӑнах палӑрать. Иртнӗ ҫул май уйӑхӗнче заводра тӗрлӗ сӑлтавсемпе 22 ҫынна ӗҫрен кӑларса янӑ. Нумайӗшне вӗсенчен прогулсем тунӑшӑн кӑларнӑ. Июнӗн 26-мӗшӗнче тухнӑ Указ хыҫҫӑн ӗҫ пачах улшӑннӑ. Июль уйӑхӗнче 2 прогул, сентябрь уйӑхӗнче 2, декабрь уйӑхӗнче пӗрре. Ноябрь уйӑхӗнче ӗҫ дисциплинине пӑснӑ тӗслӗхсем пӗрре те пулман. Дисциплина лайӑхланса пыни, паллах ӗнтӗ, чи малтан ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳснинче курӑнать. Иртнӗ ҫулӑн малтанхи ҫурҫулӗнче кашни рабочин ӗҫ кунӗ пуҫне туса кӑларнӑ продукци 37,9 декалитр шутланнӑ пулсан, иккӗмӗш ҫурҫулӗнче вӑл хисеп 42,3 декалитра ҫити хӑпарнӑ. Декабрь уйӑхне уйрӑммӑн илсен, вӑл хисеп 46,3 декалитр таран ӳснӗ. Заводра ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетес тӗлӗшпе виҫҫӗмӗш бригада—Захаров юлташ ертсе пыракан бригада палӑрса тӑрать. Вӑл производство планне тултарас енӗпе те чи малта пырать. Декабрь уйӑхӗнчи плана 111 процент тултарнӑ.

Дисциплинӑна лайӑхлатса пынӑ май производствӑра ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳссе пынине Улатӑрти йывӑҫ каскалакан 8-мӗш номерлӗ завод ӗҫӗнче те аван курма пулать. Иртнӗ ҫул июнь уйӑхӗнче ҫӗнӗ нормӑсене 80—90 процент таран ҫеҫ тултарса пынӑ пулсан, октябрьпе ноябрь уйӑхӗсенче 105—110 процентшар тултарса пынӑ. Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстермелли плана 130 процент таран пурнӑҫланӑ. Паллах ӗнтӗ, ку ӑнсӑртран пулнӑ ӗҫ мар. Кунта прогулсене пӗтӗмпех пӗтернӗ.

Прогулсем чакса пыни куҫ умӗнчех. Анчах вӑл ҫителӗклӗ мар-ха. Указӑн ӗмӗчӗ—прогулсене чакарасси ҫеҫ мар, ӗҫ дисциплинине пӑсассине, прогулсене пӗтӗмпех, тӗпӗ-йӗррипех пӗтерсе пырасси пулать. Ҫакӑн пек задача. Анчах прогулсем, пӗр ӗҫрен тепӗр ҫӗре куҫса ҫӳресси халӗ те пӗтмен-ха. Цифрӑсемпе фактсем ҫакна кӑтартса параҫҫӗ: чылай предприятисемпе артельсенче чӑн-чӑн ҫирӗп дисциплинӑшӑн кирлӗ пек кӗрешмеҫҫӗ. Хӑшпӗр ҫӗрте прогулсен хисепӗ чакма мар, ӳссе пыни сисӗнет. Кирери вӑрманпромхозра прогулсем ӳсни палӑрать. Ноябрь уйӑхӗнче 5 прогул, декабрь уйӑхӗнче 9 пулнӑ. Ҫакӑн пек фактсем ытти предприятисемпе артельсенче те пур. Вӑл тӗслӗхсем июнӗн 26-мӗшӗнче кӑларнӑ Указа пурнӑҫа ҫирӗп кӗртсе пыманни ҫинчен каласа параҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ: «Прогулсем чакрӗҫ-ха» тесе, тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса ларма пӗрре те кирлӗ мар.

Пачах та урӑхла, прогулсемпе кӗрешессине, СССР Верховный Совет Президиумӗ июнӗн 26-мӗшӗнче кӑларнӑ Указа пурнӑҫа кӗртессишӗн кӗрешес ӗҫе темиҫе хут вӑйлатмалла. Хӑшпӗр ҫӗрте прогулсемпе кӗрешес ӗҫе пӗр кӗске вӑхӑтлӑха ирттермелли кампани тесе кӑна ӑнланма шутлаҫҫӗ. Вӑл пӗрре те тӗрӗс мар. Ун пек киревсӗр шухӑшсене хаяррӑн сивлемелле. Прогулсемпе кӗрешесси, производствӑра ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетсе йӗркелесе пырасси — тӑтӑшах туса пымалли ӗҫ, ӑна кулленех вӑйлатса пырас пулать.

Уйрӑм фабрик-завод директорӗсем, предприятисемпе артельсенчи руководительсем хӑшпӗр ҫӗрте халӗ те прогульщиксене хӳтӗлеме пӑрахман. Вӗсем хӑйсен работникӗсемпе туслӑ, ырӑ-кӑмӑллӑ пурӑнас тесе, пӗр-пӗрин хушшинчи ҫыхӑнӑва пӑсас мар тесе прогулсене курмӑш пулса тӑраҫҫӗ. Ун пек руководительсен шухӑшӗ, логики пит те паллӑ вара: «пӗрле ӗҫлетпӗр килӗшӳллӗ пурӑнатпӑр, ӗҫе пӗр 25 минут хушши кая юлса тухнишӗн пӗтӗм ӗҫ чарӑнса лармӗ ӗнтӗ. Хамӑн савнӑ работнике уншӑнах суда парса мӗншӗн-ха кӑмӑлне хуҫас?»

Ӗҫри дезорганизаторсене, кахалсене, прогул тӑвакансене ҫакӑн пек ачашласа пурӑнакан ҫӗрӗк либералсем пӗтмен-ха.

СССР Верховный Совет Президиумӗ июнӗн 26-мӗшӗнче кӑларнӑ Указа пурнӑҫа кӗртес ӗҫ прогулсене пӗтернипех вӗҫленмест. Указа пурнӑҫласа пынӑ никӗс ҫинче производствӑн пӗтӗм ӗҫне лайӑхлатмалла, ӗҫе тӗрӗс йӗркелемелле. Никамшӑн та секрет мар: ку тӗлӗшпе чылай предприятисем ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Хӑшпӗр ҫӗрте халӗ те иртнӗ ҫулӑн программине тултарнипе лӑпланса ларма пӑхаҫҫӗ. Ҫӗнӗ ҫулта уйрӑм предприятисем ӗҫе ҫителӗксӗр хӑвӑртлӑхпа тытӑнни, январь уйӑхӗн планне начар тултарса пыни ҫакӑнтан килет те ӗнтӗ. Социализмлӑ ӑмӑртӑва хӑшпӗр ҫӗрте кирлӗ пек йӗркелемен. Ҫавӑнпа та хӑшпӗр предприятисенче стахановецсен шучӗ ӳсес вырӑнне, чакни палӑрать. Буинскри рудникре нумаях та пулмасть 40 стахановец пулнӑ, халӗ унта стахановецсем пӗрерӗн кӑна шутланаҫҫӗ.

Июнӗн 26-мӗшӗнче кӑларнӑ Указ ытларах та ытларах усӑ патӑр тесен, ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетессишӗн, прогулсене пӗтӗмпех пӗтерессишӗн ҫине тӑрса, большевикла хастарлӑхпа кӗрешмелле. Вӑл кӗрешӗве предприятисене ертсе пырас, технологи дисциплинине ҫирӗплетес, продукци пахалӑхне лайӑхлатас ӗҫсемпе ҫыхӑнтармалла. Ҫавӑнпа пӗрлех предприятисенче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе, социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса пымалла.

Халӗ фабрик-заводсенче, артельсенче—пур предприятисенче те партин XVIII конференци ячӗпе социализмлӑ ӑмӑрту сарӑлса пырать. Производство ӗҫӗнчи ҫак чаплӑ ҫӗкленӳпе ӗҫ дисциплинине малалла ҫирӗплетсе пырас, ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартас, стахановецсемпе ударниксен йышне ӳстерес, производство планӗсене хисеп енчен те, пахалӑх тӗлӗшӗнчен те ытлашшипех тултарас ӗҫре анлӑн усӑ курмалла.

* * *

Колхозсен ӑмӑртӑвӗ

СЕНТЕР. Пашалукассинчи пуҫламӗш парторганизаци юлашки вӑхӑтра колхозсене ертсе пырас ӗҫе чылаях лайӑхлатрӗ, хӑйӗн авангардлӑ рольне ӳстерчӗ. Коммунистсене колхоз производствинче тӗрӗс вырнаҫтарса тухнӑ. Ҫавна пула ялсоветне кӗрекен колхозсем иртнӗ ҫулта тухӑҫлӑ тырпул туса илес тата йышлӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе чаплӑ ҫитӗнӳсем турӗҫ. Колхозсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плансене ӑнӑҫлӑн тултарса пыраҫҫӗ.

Пӗтӗм Союзри XVIII партконференцине тата суйлавсене хатӗрленнӗ май, колхозсем ҫуракине кӑтартуллӑн хатӗрленессишӗн кӗрешӳ пуҫласа ячӗҫ. Колхозсем удобренисем хатӗрлес тӗлӗшпе уйрӑмах тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. «Хӗрлӗ Октябрь» колхоз вырӑнти удобренисем чылай пухса хатӗрлерӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем, пурӗ [illegible] ҫын, агротехникӑна ҫине тӑрса вӗренеҫҫӗ. Ку вӑхӑтчен 6 заняти ирттернӗ.

«Хӗрлӗ Октябрь» колхоз «Майӑн пӗрремӗш» колхозпа ӑмӑртӑва тухрӗ.

Г. СОЛОВЬЕВ.

УЙРӐМ ОКРУГСЕНЧИ СУЙЛАВ КАМПАНИЙӖ

Хулари коммунальнӑй отделӑн Шупашкарти гостиницӑри рабочисемпе служащисен коллективӗн пухӑвӗ 55-мӗш номерлӗ суйлав округӗ тӑрӑх Шупашкар хула Советне депутата суйлама Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссарӗн заместителӗн

Иван Ильич Золотников

юлташӑн кандидатурине тӑратнӑ

Январӗн 24-мӗшӗнче Шупашкарти гостиницӑри рабочисемпе служащисен пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пуху пӗр ыйту—Шупашкар хула Советне депутата суйлама кандидат тӑратасси ҫинчен сӳтсе-яврӗ.

Рабочисемпе служащисен пухӑвне гостиницӑн хуҫалӑх заведующийӗ, комсомолец Майоров юлташ уҫрӗ. Пухура Шупашкар хула Совет председателӗн заместителӗ Петров юлташ тухса сӑмах каларӗ.

— Пирӗн паян,—тесе калать Петров юлташ,—Шупашкар хула Советне депутата суйлама кандидат тӑратмалла. Депутата суйлама Ленин—Сталин парти ӗҫне чӗререн парӑннӑ ҫынна, халӑх шанӑҫне тӳрре кӑларма пултаракан, пирӗн хулана малашне те чечеклентерсе пыма тӑрӑшакан ҫынна палӑртас пулать.

Петров юлташ хыҫҫӑн Майоров юлташ сӑмах илсе ҫапла каларӗ:

— Гостиницӑра ӗҫлекен рабочисемпе служащисен ячӗпе эпӗ Шупашкар хула Советне депутата суйлама Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссарӗн заместителӗн Иван Ильич Золотников юлташӑн кандидатурине тӑрататӑп.

Золотников юлташ 1903 ҫулта, Елчӗк районӗнче ҫуралнӑ, 1927 ҫултанпа ВКП(б) членӗ, финанс енӗпе аслӑ шкултан вӗренсе тухнӑ. 1921 ҫултанпа тӗрлӗ ҫӗрте ӗҫлет, активлӑ общественник, тӳрӗ работник.

Майоров юлташ сӗнӗвне Попова юлташ хапӑл туса йышӑнса, ҫапла калать:

— Эпӗ Золотников юлташа 1935 ҫултанпа пӗлетӗп. Эпир шаннине вӑл тӳрре кӑларӗ, тесе шутлатӑп.

Монахов (гостиница директорӗ), Куткин (горисполкомӑн ремонтнӑй контора начальникӗ) юлташсем Майоров сӗнӗвӗпе килӗшсе, сӑмах тухса каларӗҫ.

Пуху йышӑннӑ резолюцире ҫапла каланӑ:

«Эпир, гостиницӑри рабочисемпе служащисем, 55-мӗш суйлав округӗ тӑрӑх Шупашкар хула Советне депутата суйлама Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссарӗн заместителӗн Иван Ильич Золотников юлташӑн кандидатурине тӑрататпӑр. Эпир Золотников юлташран 55-мӗш номерлӗ суйлав округӗ тӑрӑх Шупашкар хула Советне депутата суйланма баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтатпӑр. Ҫавнашкалах 55-мӗш номерлӗ суйлав округӗнчи мӗнпур суйлавҫӑсене пирӗн кандидатурӑшӑн Иван Ильич Золотников юлташшӑн сасӑлама чӗнетпӗр».

Пуху 55-мӗш суйлав округӗ тӑрӑх довереннӑй пулса ӗҫлеме Шупашкар хула Совечӗн ҫутӗҫ пайӗн сотрудницине, РСФСР шкулӑн тава тивӗҫлӗ учительницине А. В. Черпакова юлташа суйла[illegible]

Чарыков юлташ кандидатуришӗн сасӑлама пулаҫҫӗ

Январӗн 24-мӗшӗнче Чӑвашсен Государство издательствинче ӗҫлекен работниксен пӗрлехи пухӑвӗ пулса иртрӗ.

Пуху Шупашкарти Водопьянов ячӗпе тӑракан тир-сӑран комбинатӗнчи рабочисем, служащисем тата инженерно-технически работниксем 496-мӗш номерлӗ Шупашкар суйлав округӗнчи мӗнпур суйлавҫӑсем патне чӗнсе каланине сӳтсе-яврӗ.

— Эпир, Чӑвашгосиздатра ӗҫлекен работниксем, — терӗ Колюшкин юлташ,—СССР Верховный Совечӗн Национальноҫсен Советне депутата суйлама тӑратнӑ Иван Матвеевич Чарыков юлташ кандидатуришӗн сасӑлама пулатпӑр.

Ун хыҫҫӑн тухса калакансем пурте Чарыков юлташӑн кандидатурине ырласа, хӑйсен сасӗсене Ленин—Сталин партийӗн шанчӑклӑ ывӑлӗшӗн пама пулчӗҫ.

Пуху пӗрсаслӑ пулса ҫакӑн пек резолюци йышӑнчӗ:

«Чӑвашсен Государство Издательствинче ӗҫлекенсен коллективӗн пӗрлехи пухӑвӗ, Шупашкарти Водопьянов ячӗпе тӑракан тир-сӑран комбинатӗнчи рабочисен, служащисен тата инженерно-технически работниксен чӗнӗвне сӳтсе-явса, СССР Верховный Совечӗн Национальноҫсен Советне депутата суйлама ВКП(б) Обкомӗн пӗрремӗш секретарӗн Иван Матвеевич Чарыков юлташӑн кандидатурине тӑратнине ырласа, ӑна Шупашкар суйлав округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтать.

Чӑвашгиз коллективӗ суйлав кампанине активлӑн хутшӑнса ӗҫлеме пулать. Ҫав вӑхӑтра январьпе февраль уйӑхӗсенчи производствӑллӑ плана тултарма, лайӑх пахалӑхлӑ продукци кӑларса пыма, ӗҫ дисциплинине вӑйлатма, партин XVIII конференцийӗ ячӗпе пуҫланнӑ социализмлӑ ӑмӑртӑва татах та анлӑн сарса пыма пулать».

ИШЛЕЙ, январӗн 25-мӗш. (Телефонпа). Ӗнер районри чылай колхозсенче тата район центрӗнчи организацисемпе учрежденисенче пысӑк хаваслӑхпа суйлав умӗнхи митингсемпе пухусем пулса иртрӗҫ.

Мамӑш ялсоветне кӗрекен Буденный ячӗпе тӑракан колхозра колхозниксем пурте пекех пухӑва пынӑ. Вӗсем Шупашкарти тир-сӑран комбинатӗнчи рабочисем, служащисем тата инженерно-технически работниксем Шупашкар суйлав округӗнчи мӗнпур суйлавҫӑсене чӗнсе каланине сӳтсе-яврӗҫ. Колхозниксем СССР Верховный Совечӗн Национальноҫсен Советне депутата суйлама ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн пӗрремӗш секретарьне И. М. Чарыков юлташа кандидата тӑратнине ырларӗҫ.

П. Ильин колхозник пухура ҫапла каларӗ:

— И. М. Чарыков юлташ Ленин—Сталин партийӗн шанчӑклӑ ывӑлӗ, ҫирӗп большевик. Эпӗ суйлавҫӑсене кӑҫалхи февралӗн 16-мӗшӗнче пурте пӗр ҫын пек пулса партин шанчӑклӑ ывӑлӗшӗн—Иван Матвеевич Чарыков юлташшӑн сасӑлама чӗнетӗп,—тет вӑл.

Пухӑва пухӑннӑ колхозниксем Пӗтӗм Союзри XVIII партконференци тата суйлав кунӗ тӗлне вӑрман хатӗрлес плана тултарма пулчӗҫ.

Паян 13 ҫынтан ятарласа организациленӗ бригада вӑрман хатӗрлеме тухса кайрӗ.

Ҫавӑн пекех Сарпай ялсоветне кӗрекен «Труд» колхозра та суйлав умӗнхи пуху пулса иртнӗ. Унта та Шупашкарти тир-сӑран комбинатӗнчи рабочисем чӗнсе каланине ырларӗҫ.

«Труд» колхоз ҫуракине тӗплӗн хатӗрленсе пырать. Вӑрлӑхсене сортласа ҫитернӗ, ялхуҫалӑх машинисене юсанӑ. Минераллӑ удобренисем те хатӗрлеме тытӑннӑ.

Колхозниксем суйлав кунне ҫуракине пур енчен те хатӗрленсе ҫитнипе тата вӑрман хатӗрлес плана тултарнипе кӗтсе илме пулчӗҫ. Кунта та 10 ҫынтан организациленӗ бригада вӑрмана тухса кайнӑ.

Ялсоветсенче ВКП(б) райкомӗпе район Совечӗ янӑ агитаторсем ӗҫлеҫҫӗ.

* * *

Вӑрман хатӗрлес плана срокчен тултарар!

ВӐРМАР, январӗн 25-мӗш. (Телефонпа, хамӑр корр.). СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ вӑрман хатӗрлевӗнче 1941 ҫулти пӗрремӗш кварталта ҫуран тата лашапа ӗҫлемелли тӳлевлӗ повинность тӑвасси ҫинчен йышӑннӑ постановленине районри колхозниксем пысӑк кӑмӑлпа кӗтсе илчӗҫ. «Арабось» колхоз колхозникӗсем, пурӗ 115 ҫын, вӑрман ӗҫлеме тухса кайрӗҫ. «Арабось» колхозӑн 1.800 кубла метр вӑрман касса хатӗрлемелле, вӗсем 1.600 кубла метр касса хатӗрленӗ те ӗнтӗ. Кунсӑр пуҫне, 1.840 кубла метр турттармалла пулсан, ку таринччен 1.200 кубла метр турттарнӑ. Халӗ, СССР Совнаркомӗпе ЦК ВКП(б) постановленийӗ тӑрӑх, вӗсене татах 1.000 кубла метр касса хатӗрлеме тата 640 кубла метр турттарма задани панӑ.

Партин 15-мӗш съезчӗ ячӗпе тӑракан колхозӑн 1.100 кубла метр касса хатӗрлемелле тата 1.000 кубла метр турттармалла. Ҫак плана тултарма январӗн 24-мӗшӗнче колхозӑн 5 бригади вӑрман ӗҫлеме тухса кайрӗҫ.

Паянхи куна Вӑрмар районӗнче вӑрманта 386 ҫын ҫуран тата 42 ҫын лашапа ӗҫлеҫҫӗ.

ҪЕМӖРЛЕ, январӗн 24-мӗш. (Телефонпа, хамӑр корр.). Партипе правительство «СССР Вӑрман промышленность Халӑх Комиссариачӗн вӑрман хатӗрлевӗсенче 1941 ҫулти I-мӗш кварталта ҫуран тата лашапа ӗҫлемелли тӳлевлӗ повинность тӑвасси ҫинчен» йышӑннӑ постановлени колхозниксен хастарлӑхне ҫӗклесе ячӗ.

— Питех те тӗрӗс постановлени. Малашне ӗнтӗ кашни колхоз хӑйне панӑ заданине вӑхӑтра пурнӑҫласа пырӗ, мӗншӗн тесен, вӑрманта ӗҫлесси—хисеплӗ ӗҫ пулса тӑрать,—теҫҫӗ Ленин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем.

Ку колхозӑн планпа I-мӗш кварталта 3000 кубла метр касса хатӗрлемелле, 4000 кубла метр турттармалла. Ҫак заданине колхозниксем срокчен тултарма пулаҫҫӗ. Январӗн 23-мӗшӗнче ку колхозран вӑрман хатӗрлевӗнче 51 ҫын ҫуран, 9 ҫын лашапа ӗҫленӗ.

«Красноармеец» колхозӑн ҫак кварталта 4.000 кубла метр касса, 4.100 кубла метр турттарса хатӗрлемелле. Вӗсем те квартал планне срокчен тултарма пулаҫҫӗ. Ӗнер вӑл колхозран вӑрманта пӗтӗмпе 81 ҫын ӗҫленӗ.

Районри колхозсем партипе правительство постановленине ҫине тӑрса пурнӑҫа кӗртсе пыма тытӑнчӗҫ. Январӗн 22-мӗшӗнче районӗпе вӑрманта пӗтӗмпе те 62 ҫын ҫуран тата 90 ҫын лашапа ӗҫленӗ пулсан, январӗн 23-мӗшӗнче 166 ҫын ҫуран, 204 ҫын лашапа ӗҫленӗ.

Авиаци моторостроенийӗн П. И. Баранов ячӗпе тӑракан центральнӑй научно-исследовательский институт работникӗсене наградӑлани

СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ, Хӗрлӗ Сывлӑш Флочӗ валли ҫӗнӗ йышши вооруженисем тӑвас ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑшӑн, Авиаци моторостроенийӗн П. И. Баранов ячӗпе тӑракан центральнӑй научно-исследовательский институтӑн 55 работникне ССР Союзӗн орденӗсемпе тата медалӗсемпе наградӑланӑ.

Ленин орденӗпе 3 ҫынна наградӑланӑ: токарь С. И. Андрианов юлташа, институт начальникне А. В. Каширин юлташа, главнӑй конструктора В. М. Яковлев юлташа.

Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе 7 ҫынна наградӑланӑ, Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе—8 ҫынна, «Знак Почета» орденӗпе —12 ҫынна, «За трудовую доблесть» медальпе — 12 ҫынна, «За трудовое отличие» медальпе — 13 ҫынна. (ТАСС).

* * *

В. В. Куйбышев ҫинчен ҫӗнӗ документсем

КУЙБЫШЕВ, январӗн 24-мӗш. (ТАСС). Вырӑнти архивсенче Валериан Владимирович Куйбышевӑн Самарти революциллӗ ӗҫӗсем ҫинчен калакан ҫӗнӗ документсем тупнӑ.

1916 ҫулта, Иркутскри ссылкӑран тарнӑ хыҫҫӑн, Куйбышев юлташ Петрограда таврӑнма шутланӑ. Анчах парти ӗҫӗсене кура унӑн Самарта чарӑнса тӑмалла пулнӑ, унта вӑл Иосиф Андреевич Адамчик ячӗпе пурӑннӑ. 1916 ҫулти сентябрӗн 18-мӗшӗнче ҫӗрле провокатор доносӗ тӑрӑх Самарти жандармсем В. В. Куйбышева арестленӗ.

Ҫӗнӗрен тупнӑ документсем хушшинче полковник Познанский Иосиф Андреевич Адамчика арестлесси ҫинчен панӑ распоряжени пур.

Архив фончӗсенче Куйбышев юлташа йӗрлени ҫинчен, допроссен протоколӗсем, унӑн заявленийӗсем, РСДРП Самар комитечӗн парти кассин отчечӗ — В. В. Куйбышев Самарта ӗҫленӗ тапхӑрти отчет — пур. РСДРП Самар комитечӗн пичечӗпе ҫирӗплетнӗ пӗчӗк хут татӑкӗ ҫинче касса прихочӗпе расходне кӑтартса панӑ. РСДРП организацисен ячӗсене номерсемпе, кружоксен ячӗсене № 1, «Волга», «Май» т. ытти ятсемпе шифрласа ҫырнӑ.

Валериан Владимирович Самарта Октябрь умӗнхи тата Октябрь хыҫҫӑнхи кунсенче ӗҫленӗ тапхӑрпа ҫыхӑнса тӑракан документсем чылай тупӑннӑ. Куйбышев юлташӑн записной кӗнеки тата рабочисемпе салтаксен депутачӗсен Совечӗн лару протоколӗ питех те интереслӗ, ҫав лару Самарта совет влаҫӗ туса хурас умӗн пулса иртнӗ. Протоколра Валериан Владимирович ҫав вӑхӑтри событисем ҫинчен каланӑ сӑмаха ҫырса хунӑ.

В. В. Куйбышев блок-ночӗсем

ССР Союзӗн Революци Музейӗ Валериан Владимирович Куйбышев пурнӑҫӗпе революциллӗ ӗҫӗсем ҫинчен калакан ҫӗнӗ документсене, вӑл тутрах унӑн блок-ночӗсене илнӗ. Блокнотсенче ҫырнисем Валериан Владимирович мӗнле ӗҫленине, вӑл хӑйӗн вӑхӑтӗнче ытти ҫынсен вӑхӑтне мӗнтери хакланине кӑтартса параҫҫӗ. Ҫав блок-нотсем ҫине Куйбышев хӑйӗн ӗҫӗн планне тӗплӗн, сехетсем тӑрӑх палӑртсах ҫырса пынӑ. Блок-нотӑн икӗ страници ҫинче В. В. Куйбышев пӗр эрне хушшинче хӑш сехетре мӗн тумаллине тӗплӗн палӑртса хунӑ.

Государствӑллӑ тата партиллӗ пысӑк ӗҫ туса пынӑ хушӑрах, Валериан Владимирович нумай вуланӑ, вӗреннӗ. Блок-нотӑн пӗр листокӗ ҫинче — занятисен расписанийӗ, ӑна Куйбышев хӑй ҫырса хатӗрленӗ. Акӑ мӗнле вӑл расписани: 1-мӗш кун — истори+беллетристика; 2-мӗш кун—экономикӑллӑ географи+нимӗҫ чӗлхи; 3-мӗш кун — математика + беллетристика; 4-мӗш кун—истори+нимӗҫ чӗлхи; 5-мӗш кун — математика + беллетристика; 6-мӗш кун—марксизм+нимӗҫ чӗлхи.

Документсем хушшинче В. В. Куйбышев 1916 ҫулти декабрӗн 4-мӗшӗнче патша тӗрминче ҫырнӑ ҫыру пур. «Часах ссылка, — тесе ҫырать унта Валериан Владимирович. — Пиншер ҫухрӑм, манӑн хаяр амаҫурийӗсем—Ҫӗпӗр, нумай уйӑха тӑсӑлакан ссылка—ҫаксем пурте манӑн тусӑмсемпе манӑн асӑмра пулӗҫ, вӑл тусӑмсемпе эпӗ сахал мар ҫутӑ минутӑсем пурӑнса ирттернӗ».

Ҫак ҫырурах Куйбышев тӗрмере хӑйӗн кунне мӗнле ирттерни ҫинчен каласа парать: «Тулашӗнчен пӑхсан, юлашки вӑхӑтра манӑн пурнӑҫ ҫапла иртсе пырать. Пиллӗк сехет ҫурӑра тӑратӑп. Чей ӗҫнӗ хыҫҫӑн, столярнӑй мастерскоя ӗҫлеме каятӑп, 12 сехетре — кӑнтӑрлахи апат, унтан каллех 6 сехетчен ӗҫлетӗп. Ӗҫ хыҫҫӑн вулатӑн... ӗҫлеме пуҫланӑранпа вӑхӑт хӑвӑртрах иртме пуҫларӗ, календарти пурӑнса ирттернӗ кунсене чӗрсе пӑрахма та аран ҫеҫ ӗлкӗрсе пыратӑн».

Революци музейӗ «Делегату XIV районной конференции ВКП(б) Красной Пресни» блок-нота сыхласа усрать, блок-нотра Валериан Владимирович Куйбышев ҫырнӑ страницӑсем пур. Музейре ҫулӑмлӑ большевик ҫинчен калакан ытти документсем те пур. (ТАСС).

Литва халӑхӗн революциллӗ кӗрешӗвӗ ҫинчен каласа паракан документсем

КАУНАС, январӗн 24-мӗш. (ТАСС). Каунасри Революци музейӗ Литвари коммунистла партин геройла революциллӗ кӗрешӳне уҫҫӑн кӑтартса паракан нумай материалсем пухнӑ.

Литвари компарти пӗрмаях хаҫат кӑларса тӑнӑ. Хаҫат вӑрттӑн тухнӑ. Музейре 1920 ҫулпа 1940 ҫул хушшинче тухнӑ хаҫатсем пур. Вӗсем хушшинче «Борьба» хаҫатӑн 1920 ҫулти ноябрь уйӑхӗнче тухнӑ пӗрремӗш номерӗ, «Коммунист», «Голос», «Наше знамя», «Тиеса» («Правда») хаҫатсем. «Тиеса» хаҫат халӗ те Литвари Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗн органӗ пулса тӑрать. Революциллӗ «Метла» журналӑн 1934 ҫулти июльре тухнӑ номерӗн хуплашки ҫине фабрикантсемпе заводчиксене шӑлса ывӑтакан рабочине ӳкерсе хунӑ. Ӳкерчӗк айне ҫапла ҫырнӑ: «Эпир тӑватпӑрах, капиталистла мӗнпур тасамарлӑха Литваран шӑлса кӑларса ывӑтӑпӑр!»

Рабочисем тӗрлӗ краскӑпа ӳкернӗ плакатсем ҫине ҫапла ҫырса хунӑ: «Тӗп пултӑр палач Сметона! Сывӑ пултӑр Литвари ӗҫҫыннисен влаҫӗ!», «СССР—мирлӗ пурнӑҫ крепоҫӗ. Пролетариатӑн тӑван ҫӗршывне хӳтлер!» Сметоновла переворот тунӑ хыҫҫӑн ҫавӑн пек плакатсем нумай кӑларнӑ. Ҫӗрле рабочисем вӗсене урамсенче ҫыпӑҫтарса ҫӳренӗ. Тӗссӗрленнӗ тата ҫуркаланнӑ плакатсен пӗр пайне шыраса тупма май килнӗ.

Ялсенче кӑларнӑ революциллӗ плакатсем уйрӑмӑнах интереслӑ. Хресченсем вӗсене хӑма татӑкӗсем ҫине карандашпа ҫырса хатӗрленӗ.

Музее Вейверяи ялӗнчен илсе пынӑ ҫавӑн пек плакатсенчен пӗрин ҫинче ҫапла ҫырса хунӑ: «Пӗлетӗн-и эсӗ, Сметонӑн ылханлӑ правительствине хирӗҫ кӗрешӗве тухма вӑхӑт ҫитрӗ?» Теприн ҫине ҫакӑн пек сӑмахсене касса ҫырса хунӑ: «Сметона сеймӗн суйлавӗсене хирӗҫ бойкот тӑвӑр!»

Витринӑсем ҫинчи кантӑксем айӗнче вӑрттӑн кӑларнӑ нумай брошюрӑсем, В. И. Ленин произведенийӗсем, Ленин ҫинчен ҫырнӑ литература, Сталин кӗнекисем, парти уставӗ тата ыттисем выртаҫҫӗ. Музей стенисем ҫине боевой хӗрлӗ ялавсем ҫакса хунӑ. Вӗсем хушшинчи чи кивӗ ялав юнпа хӗрелнӗ. Ун ҫине ҫапла ҫырса хунӑ: «Ӗҫхалӑхне эксплоатацилекенсем тӗп пулччӑр!» 18 ҫул каярах рабочисем ҫак ялава йӑтса Каунас урамӗсене тухнӑ. Музейри Ленин кӗтесӗнчи ялавсен хӗррисене траурлӑ лентӑсемпе тыттарнӑ, Литва чӗлхипе ҫапла ҫырса хунӑ: «Ленин вилнӗ, анчах унӑн ӗҫӗ пурӑнать».

Музейре Литва Советлӑ Республикине никама пӑхӑнса тӑман республика тесе йышӑнни ҫинчен В. И. Ленин алӑ пусса кӑларнӑ декрет (1918—1919 ҫулсем) копийӗ ҫакӑнса тӑрать. Унпа юнашарах историллӗ тепӗр документ — Литвари рабочисемпе хресченсен революциллӗ вӑхӑтлӑх правительстви 1919 ҫулти январӗн 16-мӗшӗнче Ленин, Свердлов, Сталин юлташсем патне янӑ ҫыру. Вӑл ҫырура ҫапла каланӑ:

«Рабочисемпе хресченсен Российӑн Литвари пролетариатпа чухӑн хресченсене тӑванлӑ пулӑшу панӑшӑн Литвари рабочисемпе хресченсен вӑхӑтлӑх правительстви ирӗке тухнӑ Вильно хулинчен Россия Социализмлӑ Республики патне пӗтӗм чӗререн салам ярать тата ӑна тав тӑвать.

Эпир ҫакна ҫирӗппӗн шанса тӑратпӑр: хӑйӗн ирӗклӗхӗшӗн пыракан кӗрешӳре Литвари пролетариат Российӑри пролетариатпа тата пӗтӗм тӗнчери пролетариатпа алла-аллӑн тытӑнса пырӗ, помещиксемпе капиталистсен ӗмӗрхи пусмӑрӗнчен ирӗке тухса, национальноҫсем ҫине пӑхса тӑмасӑр, ӗҫӗн пӗрлӗхлӗ тӑванлӑхне кӗрсе пӗрлешӗ».

Ҫывӑх вӑхӑтрах Каунасра выставка уҫӑлать, вӑл выставка Литва халӑхӗн геройла историллӗ кӗрешӳне кӑтартса парать.

* * *

ХРОНИКА

РСФСР Верховный Совечӗн Президиумӗ кӑҫалхи январӗн 24-мӗшӗнче кӑларнӑ Указпа — **А. Н. Куршев** юлташа РСФСР Автомобиль транспорчӗн Халӑх Комиссарне лартнӑ.

Ленин хушса хӑварнисем тӑрӑх

В. И. Ленин вилнӗренпе XVII ҫул тултарнӑ ятпа 1941 ҫулти январӗн 21-мӗшӗнче Пысӑк театрта пулнӑ траурлӑ чаплӑ ларура А. С. Щербаков юлташ тунӑ доклад

Юлташсем!

Владимир Ильич Ленин вилнӗ кунранпа татах тепӗр ҫулталӑк иртрӗ.

Ленин вилнӗ хыҫҫӑн иртнӗ вунҫичӗ ҫул хушшинче Сталин юлташ ертсе пынипе, Ленин хушса хӑварнисене пурнӑҫа кӗртсе пырса, тулашри тата шалти политикӑра ленинла-сталинла идейӑсене пурнӑҫа кӗртсе пырса, большевикла парти социализм ҫӗнтерӗвне, ССР Союзӗн вӑйӗпе хӑватне, унӑн оборонӑллӑ тӗрекне чечеклентерсе ҫирӗплетес ӗҫе пурнӑҫа кӗртрӗ.

Иртнӗ ҫулталӑк социализм строительствин ҫӗнӗ ҫӗнтерӗвӗсемпе тата Совет государствин тулашри политикин пысӑк ҫитӗнӗвӗсемпе паллӑ пулчӗ.

Пирӗн промышленность ҫӳлелле хӑпарса пырать. 1940 ҫулта промышленность продукцийӗн пысӑккӑшӗ 11 процент чухлӗ ӳсрӗ, продукци 13 миллиард ытла тенкӗлӗх ӳсрӗ.

1940 ҫулти юлашки уйӑхсенче йывӑр индустрин ӗҫе татса паракан участокӗсенче — металлургипе ҫӗркӑмрӑк промышленноҫӗнче тунӑ ҫӗкленӳ уйрӑмӑнах савӑнтарать. Чугун, хурҫӑ, прокат тата ҫӗркӑмрӑк кӑларас ӗҫ ӳсни 1941 ҫулта социализмлӑ промышленноҫа татах та хӑватлӑнрах ҫӗклесе яма лайӑх условисем туса парать. Ҫак паха факта та шута илес пулать: 1940 ҫулӑн иккӗмӗш ҫурҫулӗнче, «Пахалӑхсӑр е комплектлӑ мар продукци кӑларнӑшӑн тата обязательнӑй стандартсене пӑснӑшӑн промышленноҫлӑ предприятисем ответлӑ пуласси ҫинчен» Указ кӑларнӑ хыҫҫӑн, продукци пахалӑхӗ сисӗнмеллех лайӑхланчӗ.

Колхоз стройне малалла ҫирӗплетсе пынӑ никӗс ҫинче социализмлӑ ялхуҫалӑхӗ пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ.

1940 ҫулта пухса илнӗ пӗтӗм тӗштырӑ хисепӗ 7 миллиард пӑт патнелле ҫывхарать. Ытти мӗнпур культурӑсен—сахӑр кӑшманӗн, ҫӗрулмин, выльӑх апачлӗх культурӑсен пӗтӗм тухӑҫлӑхӗ те хӑпарчӗ.

Колхозри выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ ӑнӑҫлӑн аталанса пычӗ. 1940 ҫулти 11 уйӑх хушшинче колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли ҫӗнӗ фермӑсем 42 пин ферма организациленӗ, мӑйракаллӑ шултра выльӑх-чӗрлӗх хисепӗ чылаях ӳсрӗ тата сыснасемпе сурӑхсен хисепӗ уйрӑмӑнах вӑйлӑн ӳсрӗ.

Иртнӗ ҫулталӑк халӑх хуҫалӑхне вӑйлатас ӗҫри ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе, хулара социализмлӑ промышленность, ялта колхозсемпе совхозсем ӳснипе, Совет государстви ӳссе ҫирӗпленсе пынипе, ӗҫҫыннисен материаллӑ тата культурӑллӑ пурнӑҫӗ ӳссе пынипе паллӑ пулчӗ.

Совет правительствин тулашри ӑслӑ тата пӗрмаях пӗр ҫулпа пыракан политикине пула 1940 ҫулта пирӗн территори чылаях сарӑлчӗ, Совет Союзӗн вӑйӗсем хутшӑнчӗҫ, унӑн чиккисем ҫирӗпленчӗҫ. Ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ чиккисемпе Ленинград хулишӗн хӑрушсӑрлӑх туса хунӑ.

Ҫирӗм ҫул ытла каярах пирӗн ҫӗршывран законсӑр йӗркепе тытса илнӗ Бессараби халӗ ӗнтӗ каллех советлӑ Бессарабия пулса тӑчӗ. Ҫурҫӗр Буковина совет ҫӗрӗ пулса тӑчӗ. Балти тинӗсӗн ҫыранӗсем ҫинче хӗрлӗ ялав тӗреклӗн ҫирӗпленсе тӑчӗ—Литва, Латвия тата Эстония Совет Союзӗн составне кӗчӗҫ.

Халӗ ӗнтӗ ССР Союзӗнчи халӑхсен тӑванлӑ ҫемьинче Советлӑ Союзлӑ 16 Республика шутланать, социализм ҫӗршывӗнчи халӑх хисепӗ 193 миллион ҫынна ҫити ӳсрӗ.

Ҫак кунсенче ҫӗнӗ республикӑсемпе облаҫсенчен СССР Верховный Советне депутатсем суйларӗҫ.

Ҫак республикӑсемпе облаҫсенчи халӑхсем халӗ ӗнтӗ хӑйсен кунҫулӗн хуҫисем пулса тӑчӗҫ, коммунистсемпе беспартийнӑйсен блокӗн кандидачӗсемшӗн пӗр ҫын пек пӗр шухӑшлӑ пулса сасӑласа, вӗсем хӑйсен ирӗкне—Совет Союзӗнчи мӗнпур ӗҫҫыннисемпе пӗрле ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑвас ирӗкне каласа, кӑтартса пачӗҫ. Интернационализмӑн ленинла-сталинла идейи, халӑхсем хушшинчи туслӑха ҫирӗплетессишӗн тата сарассишӗн тӑрӑшни татах та тепӗр чаплӑ ҫӗнтерӳ турӗҫ.

Ҫакӑн пек ӗнтӗ, кӗскен каласан, Советсен ҫӗршывӗнчи халӑхсем Совет правительстви, ВКП(б) Центральный Комитечӗ тата пирӗн ҫулпуҫ Сталин юлташ ертсе пынипе иртнӗ ҫулта тунӑ ҫитӗнӳсем. **(Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).**

I.

Юлташсем!

Юлашки ҫул хушшинче Совет правительствипе ВКП(б) Центральный Комитечӗ питех те кирлӗ, историллӗ вырӑн йышӑнса тӑракан мероприятисем палӑртса хучӗҫ тата вӗсене пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Кунта эпӗ «Сакӑр сехетлӗ ӗҫ кунӗ ҫине, ҫичӗ кунлӑ ӗҫ эрни ҫине куҫасси ҫинчен тата рабочисемпе служащисене предприятисемпе учрежденисенчен хӑйсен ирӗкӗпе тухса кайма чарасси ҫинчен» кӑларнӑ Указ пирки, «СССР государство ӗҫ вӑйӗсен резервисем ҫинчен» кӑларнӑ Указ пирки, «Пахалӑхсӑр е комплектлӑ мар продукци кӑларнӑшӑн тата обязательнӑй стандартсене пӑснӑшӑн промышленноҫлӑ предприятисем ответлӑ пуласси ҫинчен» кӑларнӑ Указпа ытти хӑшпӗр ӗҫсем пирки калатӑп.

Ҫак мероприятисем Ленин хушса хӑварнисене малалла пурнӑҫа кӗртсе пыни пулса тӑраҫҫӗ.

Ҫак решенисен историллӗ пӗлтерӗшӗ акӑ мӗнре: вӗсем ӗҫ тухӑҫлӑхне вӑйлӑн хӑпартса яма, ҫӗршыв оборонин хӑватне ҫирӗплетме, халӑх хуҫалӑхӗнче кирлӗ пек йӗркелӗх, дисциплина тата организованность туса хума пулӑшаҫҫӗ.

Ҫак решенисем ҫывӑх вӑхӑтри практикӑллӑ ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ кӑна мар, вӗсем тата социализмлӑ промышленность аталанса вӑйланса пымалли малашнехи ҫулйӗрсене палӑртса параҫҫӗ, вӗсенче социализмпа коммунизм строительствин малашнехи ҫулйӗрӗсемшӗн сталинла тӑрӑшни палӑрса тӑрать.

Государствӑн ӗҫ вӑйӗсен резервисем ҫинчен тӑракан ыйту вӑл—пирӗн социализмлӑ промышленноҫӑн ыранхи кунӗ ҫинчен, вӑл аталанса вӑйланса пымалли малашнехи ҫулйӗрсем ҫинчен тӑракан ыйту, ҫакна ӑна пурте мар ҫийӗнчех ӑнланса илчӗҫ.

Марксизм-ленинизм ҫапла вӗрентет: ҫултан ҫулах перекетлесе ӳстерсе пымасӑр общество вӑйланса пыма пултараймасть, ҫултан ҫулах пулса пыракан анлӑ воспроизводствӑсӑр перекетлесе ӳстерсе пыма ҫук, ҫакӑнпа пӗрлех анлӑ воспроизводство ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстернипе те, ҫавӑн пекех производствӑна ҫӗнӗ рабочисем явӑҫтарнипе, ӗҫлекен предприятисене анлӑлатнипе тата ҫӗнӗ фабрикӑсемпе заводсем тунипе пурнӑҫа кӗрсе пырать.

Капитализмлӑ ҫӗршывсенче ӗҫ тупайманнипе ирӗксӗрех ӗҫсӗр ларакан ҫынсен миллионлӑ ҫарӗ, заводсен хапхисем умӗнче чӑтӑмлӑн ӗҫ кӗтсе тӑракан резерври текен ӗҫ вӑйӗн ҫарӗ пур, ҫакӑ вӑл—кирек мӗнле пулсан та пурпӗрех капитализмпа пӗрле ҫӳрекен япала.

Ӗҫ вӑйӗн резерври ҫарӗ—капитализмран уйӑрӑлма пултарайман япала. Капитализм кризиссемсӗр тата производствӑри анархисӗр пулма пултарайман пекех, ӗҫ вӑйӗн резерври ҫарӗсӗр—ӗҫ тупаймасӑр пурӑнакан миллионшар ҫынсемсӗр капитализмлӑ хуҫалӑх та пулма пултараймасть.

Патша Российӗнче те, кирек мӗнле капитализмлӑ ҫӗршыври пекех, ӗҫ вӑйӗн резерври ҫарӗ ҫавӑн пек ҫулйӗрсемпех пулса пынӑ.

Российӑри ҫулсемпе сукмаксем тӑрӑх ҫӗршер пин те миллионшар чухӑн хресченсем, ӗҫукҫи шыраса, тӑранса пурӑнма мӗнле те пулин средствӑсем шыраса, хуланалла туртӑннӑ. Вӗсем промышленноҫри ӗҫ вӑйӗсен резерври ҫарӗн речӗсене тӑнӑ, фабрикӑсемпе заводсем тӑрӑх ӗҫ шыраса ҫӳренӗ. Резерври ҫара пополнени парса тӑракан тепӗр ҫӑлкуҫ вӑл—юхӑнса пыракан ремесленниксем тата хулари вак буржуази.

Ҫапла майпа вырӑс капиталисчӗсемпе помещикӗсем хӑйсем валли ӗҫ вӑйӗсен резервисене туса пынӑ.

Халӗ ӗнтӗ пирӗн ҫӗршыври положени ун пек мар. ССР Союзӗнче ӗҫсӗрлӗхе—рабочи класӑн хӑрушӑ инкекне—тахҫанах тата яланлӑхах пӗтернӗ. Ялти чухӑнлӑха тата юхӑнса пырассине яланлӑхах пӗтернӗ. Пирӗн ҫӗршывра фабрикӑсемпе заводсен алӑкӗсене шаккаса ирӗксӗрех ӗҫ ыйтса ҫӳреме тивнӗ ҫынсем ҫук. Колхозниксем ҫителӗклӗ пурнӑҫпа пурӑнакан ҫынсем пулса тӑчӗҫ. Ҫакӑ вӑл халӗ ӗнтӗ промышленноҫа ӗҫ вӑйӗ парса тӑнӑ кивӗ ҫӑлкуҫсем пӗтнине пӗлтерет. Ҫавӑнпа пӗрлех рабочи класӑн яланах пополнени илсе тӑрас пулать. Пирӗн промышленность пӗрмаях ӳссе пырать, ҫӗнӗ фабрикӑсемпе заводсем тӑваҫҫӗ, киввисене анлӑлатаҫҫӗ, ҫаксем пурте ӗнтӗ ҫӗнӗ рабочисем ыйтаҫҫӗ. Ӗҫ вӑйӗ татти-сыпписӗр пырса тӑмасан, пирӗн промышленноҫа вӑйлатса пыма, халӑх хуҫалӑхне малалла ярса пыма май ҫук.

Совет государстви умне питӗ кирлӗ те пысӑк задача—рабочи класа пополнени парса тӑракан ҫӗнӗ ҫӑлкуҫсем туса хурас задача тухса тӑчӗ.

Халӗ ӗнтӗ рабочи кадрӗсем самотекпа хутшӑнса пырасса шанма ҫук, самотек ҫине шанни вӑл—хамӑрӑн промышленноҫра ӗҫ вӑйӗ яланах ҫителӗксӗр пулассине, хамӑрӑн промышленноҫа вӑйлатас ӗҫе чылаях чӑрмантарса тӑрассине пӗлтерет.

Планлӑ социализмлӑ хуҫалӑх ҫакна палӑртать: государство материаллӑ фондсене, укҫа-тенкӗ средствисене тата ӗҫ вӑйне планласа пырать. Финанссене, техникӑна, оборудованине тата ытти материаллӑ фондсене тӗрӗс вырнаҫтарса тухасси, вӗсене ӑҫта кирлӗ ҫавӑнта ярасси, ҫакӑ вӑл—планлас ӗҫӗн кирлӗрен те кирлӗ пайӗ, анчах та, халӑх хуҫалӑхне чӑн-чӑн кирлӗ пек ертсе пырас тесен, ӗҫ вӑйӗсен резервисене планлас пулать. Планлӑ социализмлӑ промышленноҫӑн ҫак рычагне те государство аллинче ҫирӗп тытса тӑрас пулать, ӗҫ вӑйӗсен резервисене планлӑ йӗркепе тата организованно хатӗрлесе пырас пулать тата социализмлӑ промышленность интересӗсемшӗн вӑл резервсемпе маневрсем тума май тупас пулать.

Партипе Совет правительстви рабочи класс пополненийӗн пахалӑхӗшӗн те тӑрӑшмасӑр тӑма пултараймаҫҫӗ. Заводсене тӗрлӗ йышши ӑнӑҫсӑр ҫынсем, нимӗн тума та пултарайман ҫынсем, кахалсем тата ытти ҫавнашкал элементсем пынине чӑтма ҫук, рабочи класа ӑнсӑртран пырса лекнӗ ҫынсемпе варалама юрамасть.

Ӗҫ вӑйӗсен резервисем ҫинчен кӑларнӑ Указ ҫак ыйтусене пурне те татса парать, ҫакӑнта ӗнтӗ унӑн политикӑллӑ тата хуҫалӑхлӑ калама ҫук пысӑк пӗлтерӗшӗ. Государство ремесленнӑй училищесемпе чугунҫул училищисенче тата фабрикӑпа завод ӗҫне вӗренмелли шкулсенче квалификациллӗ рабочисен ҫӗнӗ кадрӗсене организованно хатӗрлеме тытӑнчӗ.

Партипе правительствӑн ҫак решенийӗ большевиксене тивӗҫлӗ сулӑмлӑхпа пурнӑҫа кӗрсе пырать. Призыв йӗркипе подростоксемпе яшӑсене 600 пин ҫынна вӗренме илнӗ, вӗсем хӑйсен вӗренӗвне пуҫларӗҫ те ӗнтӗ. Ҫак ӗҫ ҫулран ҫулах сарӑлса пырӗ. Ҫакӑ вӑл акӑ мӗне пӗлтерет: ҫывӑх вӑхӑтрах пирӗн ҫӗршыв квалификациллӗ, политика енӗпе воспитани илнӗ, хӑйсен вӑйхалче тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн, унӑн хӑватне ҫирӗплетес ӗҫшӗн парас кӑмӑлпа ҫунакан ҫамрӑк рабочисен ҫӗнӗ кадрӗсене кӗрет.

СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ «Сакӑр сехетлӗ ӗҫ кунӗ ҫине, ҫичӗ кунлӑ ӗҫ эрни ҫине куҫасси ҫинчен тата рабочисемпе служащисене предприятисемпе учрежденисенчен хӑйсен ирӗкӗпе тухса кайма чарасси ҫинчен» кӑларнӑ Указ предприятисемпе учрежденисенче йӗркелӗхпе дисциплина туса хурас тӗлӗшпе пысӑк та кирлӗ мера йышӑннине пӗлтерет. Ҫак Указ вӑл ӗҫлев правине хӑйсене еверлӗ ӑнланнӑ ҫынсене хирӗҫ, хӑйсем валли ӗҫ вырӑнне хӑйсем шухӑшланӑ тӑрӑх суйласа илмелли право пек ӑнланнӑ, государство интересӗсемпе нушисене шута илмен ҫынсене, ӗҫлев правине—«ӑҫталла шутлатӑп, ҫавӑнталла пӑрӑнатӑп» текен принциппа предприятирен предприятине чупмалли право вырӑнне шутлакан ҫынсене хирӗҫ, пысӑкрах укҫа хыҫҫӑн хӑваланипе производствӑра тӳсме ҫук текучесть, ӗҫ вӑйӗ пӗрмаях улшӑнса тӑмалла туса пынӑ ҫынсене хирӗҫ пырать.

Иккӗмӗш пятилетка ҫулӗсенче прогульщиксем промышленноҫа кӳнӗ сиен миллиардшар тенкӗпе шутланать.

Ленин юлташ ҫапла вӗрентнӗ:

«Кам та кам халӗ дисциплина йӗркелӗхӗнчен чакать, вӑл хӑйсен хушшине тӑшмансем кӗртет» (XXVII т., 45 стр.).

Сталин юлташ ҫапла вӗрентет:

«Прогулсене кура промышленноҫшӑн вуншар та ҫӗршер пин ӗҫ кунӗ ҫухалать. Ҫакна кура пирӗн промышленноҫа сиен кӳрсе, индустрине сиен кӳрсе ҫӗршер пин те миллионшар тенкӗ пӗтет. Прогулсем тӑвасси чарӑнмасан, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пӗр вырӑнтах тапӑртатса тӑрсан, эпир хамӑрӑн индустрине малалла яма пултараймастпӑр, эпир ӗҫукҫине хӑпартма пултараймастпӑр».

Совет правительстви йӑлтах ӗнтӗ ҫӗршывпа халӑх интересӗсемшӗн летунсене, прогульщиксене тата промышленноҫа дезорганизацилекен ытти йышши ҫынсене ҫаварлӑхлас тӗлӗшпе татӑклӑ мерӑсем йышӑнчӗ.

Сакӑр сехетлӗ ӗҫ кунӗпе ҫичӗ кунлӑ ӗҫ эрни ҫине куҫнине илес пулсан, —партипе правительствӑн ҫак мероприятине те—Совет государствин хуҫалӑхпа оборона хӑватне вӑйлатакан мероприятине—пирӗн ҫӗршыври ӗҫҫыннисем пӗтӗмӗшпех ырларӗҫ.

СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ кӑларнӑ Указ пурнӑҫа кӗме пуҫланӑранпа 7 уйӑха яхӑн иртрӗ, ҫӗнӗлле ӗҫленин результачӗсем халех те ӗнтӗ сисӗнмеллех курӑнаҫҫӗ. Пуриншӗн те паллӑ, иртнӗ ҫулӑн иккӗмӗш ҫурҫулӗнче хуҫалӑхӑн пур отраҫлисем те лайӑхрах ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Промышленность ӗҫне лайӑхлатас ӗҫре Указ калама ҫук пысӑк та паха вырӑн йышӑнса тӑчӗ.

II.

Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ вӑл—обществӑллӑ ҫӗнӗ стройӑн ҫӗнтерӗвӗ валли чи пысӑк, чи кирлӗ япала,— тесе пӗр хут ҫеҫ мар вӗрентнӗ Ленин.

Сталин юлташ яланах: социализм пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗн бази ҫинче кӑна ҫӗнтерме пултарать, тесе вӗрентет.

«Мӗншӗн капитализм феодализма ҫӗмӗрме тата ҫӗнтерме пултарнӑ?—тенӗ Сталин юлташ.—Мӗншӗн тесен, вӑл ӗҫ тухӑҫлӑхӗн нумай ҫӳлтерех тӑракан нормисене тунӑ, вӑл обществӑна феодализмлӑ йӗркесем чухнехинчен нумай ытларах продуктсем илсе тӑма май панӑ. Мӗншӗн тесен, вӑл обществӑна чылай пуянтарах тунӑ. Мӗншӗн социализм хуҫалӑхӑн капитализмлӑ системине ҫӗнтерме пултарать, ҫӗнтермелле тата пурпӗрех ҫӗнтерет? Мӗншӗн тесен, социализм, хуҫалӑхӑн капитализмлӑ системипе танлаштарсан, ӗҫӗн нумай ҫӳлтерех тӑракан тӗслӗхӗсене, ӗҫӗн нумай ҫӳлтерех тӑракан тухӑҫлӑхне пама пултарать. Мӗншӗн тесен, вӑл, хуҫалӑхӑн капитализмлӑ системипе танлаштарсан, обществӑна продуктсем нумайрах пама тата обществӑна пуянрах тума пултарать» (И. Сталин, «Ленинизм ыйтӑвӗсем», 494 стр.).

Хуҫалӑхӑн социализмлӑ стройӗнче ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартма кирлӗ питех те пысӑк майсем пур.

Анчах та тума май пурри вӑл тунӑ ӗҫ мар-ха. Задача ҫакӑнта: хамӑрӑн алӑри ҫав майсене тата пысӑк йышлӑ резервсене мобилизацилемелле тата вӗсемпе усӑ курмалла.

Социализм экономика енӗпе капитализмпа ӑмӑртнӑ ҫӗрте социализмлӑ строй хӑйӗн паха енӗсене кӑтартса пачӗ те ӗнтӗ.

Пӗрремӗш пятилетка ҫулӗсенче промышленноҫра ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 41 процент хӑпарчӗ, иккӗмӗш пятилеткӑра—82 процент.

Виҫҫӗмӗш пятилеткӑра та ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӑнӑҫлӑн хӑпарса пырать. Нумай предприятисем хӑйсен умне ӗҫ тухӑҫлӑхӗ енӗпе виҫҫӗмӗш пятилеткӑна тӑватӑ ҫулта тултарас задача лартрӗҫ.

Халӑх хуҫалӑхне вӑйлатас ӗҫре ӗҫ тухӑҫлӑхӗ мӗнле пысӑк вырӑн йышӑннине ҫак тӗслӗх кӑтартса парать: халӗ ӗҫӗн вӑтам тухӑҫлӑхне кашни рабочи пӗр процент чухлӗ хӑпартни миллиард тенкӗлӗхрен кая мар продукци хушӑннипе танлашать.

ССР Союзӗнче ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартас тӗлӗшпе сахал мар ҫитӗнӳсем тунӑ. Анчах ку тӗлӗшпе пирӗн малашне питех те пысӑк ӗҫ туса иртермелле-ха.

Пирӗн ҫӗршывра ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартмалли резервсем калама ҫук пысӑк. Вӗсем, пуринчен малтан, пирӗн халӑх хуҫалӑхӗн малта пыракан, пӗтӗмӗшпех те туллийӗн усӑ курма тытӑнман техникинче, вӗсем—ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетнинче, стахановла движенине малалла сарса пынинче т. ыт. те.

Ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартмалли пысӑк та паха факторсенчен пӗри вӑл—пирӗн кадрсен тата ӗҫҫыннисен пӗтӗм массин культурӑллӑ виҫи пулать.

Культура аталанӑвӗн масштабӗсемпе хӑвӑртлӑхӗсем енчен илсе пӑхсан, пирӗн ҫӗршывпа танлашма пултаракан ҫӗршыва халиччен истори курман-ха. Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци чӑн-чӑн культурӑллӑ революци валли чаплӑ условисем туса пачӗ. Хальхи вӑхӑтра пирӗн ҫӗршывра ҫак культурӑллӑ революци пурнӑҫа кӗрсе пырать, вӑл — социализмлӑ аслӑ перестройкӑн кирлӗрен те кирлӗ пайӗ.

Анчах та пирӗн халӑх хӑйӗн кӗрешӗвӗнче лартнӑ аслӑ тӗллев—хамӑрӑн ҫӗршывра коммунизм туса хурасси — ӗҫҫыннисен культурин виҫи тӗлӗшпе те, ҫавӑн пекех кадрсен культурин виҫи тӗлӗшпе те ҫӗнӗрен ҫӗнӗ требованисем кӑларса тӑратать. Социализмран коммунизма куҫма кирли енӗпе шухӑшласа пӑхсан,—эпир урӑхла шухӑшлама та пултараймастпӑр,—пирӗн культура ҫителӗклӗ мар-ха. Киввинчен питӗ нумай юлнӑ-ха пирӗн—ӗҫе кирлӗ пек тума пӗлменни, тирпейсӗрлӗх, вӑхӑтра та тӗплӗн туманни, ҫитменлӗхсене тӳссе тӑрасси пур пирӗн.

Социализмлӑ стройра чи малта пыракан техника пулмалла, малта пыракан наукӑпа усӑ курмалла. Час-часах элементарлӑ культура та ҫителӗксӗр пулни палӑрать, ҫакна ӑна пушшех те чӑтса тӑма ҫук.

Производство условийӗсене кура калама ҫук тасалӑх пулма тивӗҫлӗ цехсем пур, анчах ун вырӑнне вӑл цехсенче—хӑлха таран пылчӑк, ҫакна пула вара брак питӗ пысӑк, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пӗчӗккӗ.

Техника тӗлӗшпе культура ҫуккине пула оборудованин—машинӑсен, станоксен, инструментсен—чылаях пысӑк пайӗ пӑсӑлать тата ҫӗмӗрӗлет, мӗншӗн тесен питех те сложнӑй машинӑсене ялти урапана тыткаланӑ пек пӗлмесӗр тыткалаҫҫӗ. Тирпейсӗр тата тӗплӗ мар ӗҫленине пула, хӑш чухне «тен ӗҫ тухӗ» текен принциппа ӗҫленине пула транспортра, электростанцисенче мӗн чухлӗ аварисем пулаҫҫӗ пирӗн.

Культура ҫителӗксӗрри—ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартса пырас, хамӑрӑн аслӑ ӗҫе татах та хӑвӑртрах малалла илсе пырас ҫул ҫинче пысӑк чӑрмав пулса тӑрать.

Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ вӑл чӑрмава сирсе пӑрахассишӗн ҫине тӑрса кӗрешес пулать, культурӑн татах та ҫӳлерех пусӑмӗшӗн кӗрешес пулать.

Е ҫакӑн пек резерва—халӑх хуҫалӑхӗнчи перекетлӗхе илсе пӑхар.

Ленин халӑхӑн кашни пӗр пус укҫинех упрама, кашни пӑт кӑмрӑка, кашни пӑт тырра тата ыттине те перекетлӗн расходлама ҫине тӑрсах хушнӑ.

«Укҫана тӗплӗн тата тӳрӗ кӑмӑлпа шута илсе пыр, перекетлӗ хуҫа пул, ан кахаллан, ан вӑрла, ӗҫре ҫирӗпрен те ҫирӗп дисциплинӑна пӑхӑнса тӑр»...—тесе ҫырнӑ Ленин юлташ.

Средствӑсене, материалсене вырӑнлӑ тата тӗплӗн шута илсе расходламалла, халӑх пурлӑхӗн пӗр пусӗ те ахаль ан пӗттӗр,—ҫапла вӗрентет пире Сталин юлташ, кунсеренех вӗрентет.

Пирӗн капитализмлӑ ҫӗршывсенчи пек мар, пирӗн социализмлӑ планлӑ хуҫалӑхра халӑх пурлӑхне перекетлеме кирлӗ условисем йӑлтах пур. Анчах та ҫакӑ вӑл самотекпа пурнӑҫа кӗмест. Перекетлӗхшӗн, тӗнчери мӗнпур ӗҫшӗн кӗрешнӗ пекех, кӗрешес пулать, ҫине тӑрсах кӗрешес пулать.

Шел пулсан та, государство средствисене, чӗртавара, топливӑна, электроэнергине, оборудованине тата материалсене расходлас ӗҫ ҫине тимсӗр, хуҫасӑрла пӑхнине кӑтартса паракан фактсем сахал мар-ха пирӗн.

Пирӗн металл ҫителӗклӗ мар. Пӑхӑрха, кирек хӑш пысӑк заводрах мӗн чухлӗ металл турпаса, каяша, брака каять. Чӗртавара, топливӑна тата электроэнергине перекетсӗр, хуҫасӑрла расходланипе халӑх хуҫалӑхӗ пысӑк ҫухатусем тӳсет. Пирӗн суту-илӳпе снабжени оргӑнӗсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене пула та эпир нумай пурлӑх ҫухататпӑр.

Пирӗн ҫӗршыв пуян. Вӑл пуянлӑх кунсеренех хушӑнса тата ӳссе пырать. Анчах пирӗн чи кирлӗ ыйтусем те сахал мар. Ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартмалли резервсем пирӗн сахал мар, вӗсемпе ҫителӗклӗ таран усӑ курман. Ҫав мӗнпур резервсемпе чӑнласах лайӑх, хуҫалӑхла усӑ курас пулсан, ӗҫ тухӑҫлӑхне малалла хӑпартса пырас ӗҫре мӗнтери нумай ҫитӗнӳсем тума пулать!

«Хальхи вӑхӑтра ертсе пырас тесен, хуҫалӑха тытма пӗлес пулать, хуҫалӑха пӗлес тата ӑнланас пулать. Пӗр ҫатӑртатнипе кӑна... халӗ инҫех каяймӑн»,—тесе вӗрентет пире Сталин юлташ.

III.

Пирӗн колхозсемпе совхозсенче ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартма мӗнтери пысӑк майсем пуррине Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставки лайӑх кӑтартса парать.

Партипе правительство социализмлӑ ҫӗрӗҫне вӑйлатассишӗн калама ҫук хытӑ тӑрӑшаҫҫӗ.

Партипе правительство колхозниксене ҫапла вӗрентеҫҫӗ: ҫӗрпе пӗлсе тата хуҫалла усӑ курӑр, артель хуҫалӑхне вӑйлатса пырӑр, мӗншӗн тесен вӑл хуҫалӑх—колхозсен вӑйӗ, колхозниксен пуян пурнӑҫӗн ҫӑлкуҫӗ.

Тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлӗр, колхоз дохочӗсене ӗҫе кура валеҫӗр, колхоз пурлӑхне упрӑр—ҫакӑн пек ӗнтӗ пирӗн колхозсем кашни кунах ҫирӗпленсе пычҫӑр тесе, Сталин юлташ кӑтартса панӑ ҫул.

Ялхуҫалӑх продуктисен заготовкисемпе закупкисене иртерес политикӑри улшӑнусем, колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатас тӗлӗшпе тумалли мероприятисем колхоз производствине малалла ӳстерсе пыма ҫӗнӗ майсем туса пачӗҫ.

Лайӑх ӗҫленӗ, хуҫалӑхӑн пур отраҫлисене те вӑйлатса пынӑ колхозӑн халиччен нумайрах продукци памалла пулнӑ. Халӗ, продуктсене обязательнӑй йӗркепех акӑнакан ҫӗрӗн кашни гектарӗнчен памалла чух, ҫак тӳрӗсӗрлӗхе пӗтернӗ. Ялхуҫалӑх продуктисен заготовкӑри политика халӗ ӗнтӗ малта пыракан колхозсене хавхалантарса пырать, кая юлса пыракан колхозсене малтисемпе танлаштарма хушать.

Партипе правительствӑн ҫак мероприятийӗсем ҫине колхозниксем ӗҫпе ответлерӗҫ. Тӳрӗ кӑмӑлпа тӑрӑшса ӗҫлесе, кӑҫалхи ҫул вӗсем лайӑх тухӑҫлӑ тырпул кӗрешсе илчӗҫ, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх хисепне ӳстерчӗҫ, хуҫалӑхӑн ытти пур отраҫлисене те вӑйлатса пыраҫҫӗ.

Тырӑ, какай, пахча-ҫимӗҫсем тата ытти продуктсем те нумайланчӗҫ.

Пирӗн ялхуҫалӑхӗ ҫӗнӗ, татах та ҫӳлерех пусӑма хӑпарчӗ.

Пирӗн ҫӗршывра 240.000 колхоз. Чи ҫӗнӗ техникӑпа хӗҫпӑшалланнӑ колхозсем халӗ ӗнтӗ никам ҫӗнтерейми вӑй пулса тӑчӗҫ. Шӑпах ҫак никӗс ҫинче ӗнтӗ юлашки ҫулталӑк колхозри халӑх пуҫарӑвӗ хӑватлӑн палӑрнипе, ҫулсем, каналсем, колхозсенче шыв тытса тӑмалли вырӑнсем тӑвас, шурлӑхсене типӗтес тӗлӗшпе халӑх движенийӗ массӑллӑн сарӑлса кайнипе паллӑ пулчӗ, вӑл ӗҫсенче вуншар та ҫӗршер пин колхозниксем йӑлтах хӑйсен ирӗкӗпе хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Колхозниксен ҫак ӑнланулла та ирӗклӗ пуҫарӑвӗ обществӑллӑ хуҫалӑх интересӗсем, государство интересӗсем миллионшар хресченсемшӗн мӗнтери ҫывӑх интерессем пулса тӑни ҫинчен каласа параҫҫӗ. Нимӗн иккӗленмелли те ҫук, халӑхӑн ҫак пуҫарӑвӗ ӳссе тата сарӑлса пырӗ.

Эпир ялпа хулара мӗн таран лайӑхрах ӗҫлӗпӗр, совет хуҫалӑхӗн паха енӗсемпе тата резервисемпе мӗн таран туллирех усӑ курӑпӑр, эпир малалла—коммунизм патнелле ҫавӑн чухлӗ хӑвӑртрах кайса пырӑпӑр.

Ҫитӗнӳсем пирӗн пысӑк. Анчах пирӗн Сталин юлташ асӑрхаттарса хунисем ҫинчен пӗр минутлӑха та манас пулмасть—тунӑ ҫитӗнӳсемпе вӗҫкӗнленсе тата мӑнкӑмӑлланса каймалла мар.

«Пирӗн юлташсенчен хӑшпӗрисем, —тенӗ Сталин юлташ,—ӑнӑҫусемпе ӳсӗрӗлсе кайса, хӑйсене хӑйсем мӑнна хума тата мухтанчӑклӑ юрӑсемпе, калӑпӑр: «пире халӗ тинӗс те чӗркуҫҫи таран ҫеҫ», «эпир кирек кама та ҫӗлӗксемпе персех ҫӗнтерме пултаратпӑр» тата ытти ҫавӑн пек юрӑсемпе лӑплантарма пуҫлас хӑрушлӑх пур» («Ленинизм ыйтӑвӗсем», 483 стр.).

Тунӑ ҫитӗнӳсемпе вӗҫкӗнленсе тата мӑнкӑмӑлланса каймалла мар текен принцип—пирӗн партишӗн яланах ертсе пыракан принцип пулнӑ.

Анчах та Сталин юлташ асӑрхаттарса хуни хальхи обстановкӑра уйрӑмӑнах ҫивӗч те актуальнӑй вырӑн йышӑнса пырать. Акӑ мӗншӗн. Капитализмлӑ ҫӗршывсенче тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ ҫулӑмӗ явӑнать. Ҫак вӑрҫӑ пушарӗн хӗлхемӗсем пӗтӗм тӗнче тӑрӑх вӗҫсе сапаланаҫҫӗ.

Совет Союзӗ вӑрҫӑ вӑрҫмасть, мирлӗ пурнӑҫпа нейтралитет политикине ҫирӗппӗн тытса пырать. Ҫакӑн пек политикӑна пурнӑҫа кӗртсе пырас тесе, ӑна пӗрмаях реальнӑй вӑйпа ҫирӗплетсе пырас пулать.

Пирӗн ҫӗршыв ҫар енӗпе вӑйсӑр пулнӑ вӑхӑт инҫетри авалӑха тӑрса юлчӗ. Хӑйӗн хуҫалӑхпа оборонин хӑвачӗ ҫине таянса, ССР Союзӗ никама та пӑхӑнса тӑман политикӑна тытса пырать, вӑл политика совет ҫӗршывӗн интересӗсенчен кӑна тухса тӑрать.

Хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва вӑрҫӑпа килсе тапӑнас хӑрушлӑхран хӳтлесе хурас тесе, Ленин хушса хӑварнӑ тӑрӑх ӗҫлесе пырса, Совет влаҫӗ хӑватлӑ Хӗрлӗ Ҫар туса хучӗ, ӑна чи ҫӗнӗ техникӑпа пуянлатрӗ тата совет халӑхне мирлӗн ӗҫлесе пурӑнма кирлӗ условисем туса пачӗ. Ҫакӑ пулать ӗнтӗ совет правительствипе пирӗн парти тунӑ асларан та аслӑ ҫитӗнӳ.

Анчах социализм ҫӗршывӗ капитализмлӑ йӗритавралӑх условийӗсенче ӳссе вӑйланса пырать. Совет Союзӗн чиккисен леш енче пулса иртекен ӗҫсем ҫине эпир пӗр интерессӗр пӑхса тӑма пултараймастпӑр. Хальхи вӑхӑтра тӗнчери обстановка уйрӑмах йывӑр, вӑл тӗрлӗрен кӗтмен ӗҫсем кӑларса тӑратма пултарать. Ҫак условисенче тулашри хӑрушсӑрлӑх ӗҫӗпе хамӑрӑн мӗнпур позицисене ҫирӗплетес ӗҫ тӗлӗшпе сыхӑлӑха татах та ытларах вӑйлатни кирлӗ.

Ҫавӑнпа та ҫӗршыв оборонин интересӗсем пирӗн мӗнпур ӗҫре пӗрремӗш вырӑнта тӑма тивӗҫлӗ.

Империализмлӑ пӗрремӗш вӑрҫӑ опытне тӗпчесе вӗренсе, Ленин ҫапла каланӑ:

«Вӑрҫӑ нумай ӗҫе вӗрентрӗ вӗт, ҫынсем асап курнине ҫеҫ мар, тата ҫакна та вӗрентрӗ: камӑн асларан та аслӑ техника, организованность, дисциплина тата чи лайӑх машинӑсем пур, ҫавӑ ҫиеле тухать; ҫакна вӗрентрӗ ӗнтӗ вӑрҫӑ, тата ӑна вӗрентни вӑл питех те лайӑх. Ҫакна вӗренес пулать: кучухнехи обществӑра машинӑсӑр, дисциплинӑсӑр пурӑнма май ҫук—е чи ҫӳлӗ пусӑмри техникӑна вӗренсе алла илмелле, е таптаса лапчӑтӗҫ» (XXII т., 406 стр.).

Ҫак сӑмахсене 23 ҫула яхӑн каярах каланӑ, анчах вӗсем хӑйсен пӗлтерӗшне ҫухатман, вӗсем паян та, ун чухнехи пекех, ҫивӗччӗн янӑраҫҫӗ.

Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ хӑйне хӑй лӑплантарса ларма, тимлӗхсӗр пулма, «ҫитӗнӳсемпе лӑпланса ларма» никамӑн та право ҫук.

IV.

Пирӗн ҫӗршывра социализм ҫӗнтерчӗ, ҫакӑ ӗнтӗ вӑл Ленин тума хушса хӑварнӑ тӗп ӗҫе пурнӑҫа кӗртни пулать. Социализм «халӑхӑн пурнӑҫӗпе йӑлине, кулленхи пурнӑҫӗпе йӑлине кӗрсе вырнаҫрӗ... халӑхӑн пӗтӗм пурнӑҫӗнче тапса тӑрать» (Сталин).

Эпир вӑрӑм ҫула утса тухрӑмӑр. Анчах пирӗн умра малта татах та пысӑкрах задачӑсем тӑраҫҫӗ.

Пирӗн ССР Союзӗнчен питӗ те нумай продуктсемлӗ ҫӗршыв туса хумалла, этемлӗх обществи аталанӑвӗн чи ҫӳлӗ пусӑмне—коммунизм патне ҫӗкленсе ҫитмелле.

Европӑри ытларах аталаннӑ капитализмлӑ ҫӗршывсене тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсене экономика енӗпе хӑваласа ҫитсе иртсе каймалла — ҫакӑн пек ӗнтӗ коммунизм строительствишӗн пыракан кӗрешӳри конкретлӑ программа, Сталин юлташ кӑтартса панӑ программа.

Эпир ҫак задачӑна ҫывӑхри 10—15 ҫул хушшинче татса пама пултаратпӑр. Ҫакна тума,—терӗ Сталин юлташ партин XVIII съездӗнче,—пуринчен ытларах малалла каяс ҫирӗп те иксӗлми кӑмӑл тата жертвӑсем тума хатӗр тӑни, хамӑрӑн социализмлӑ промышленноҫа пур майсемпе те сарса пыма пысӑк капиталовложенисем тума хатӗр тӑни кирлӗ.

Ӑна тума производствӑри пысӑк та чаплӑ техника пурри, промышленность пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе вӑйланса пыни кирлӗ.

Ҫак задачӑна татса парас ӗҫре 1941 ҫулта пирӗн татах тепӗр пысӑк утӑм тумалла. Промышленноҫра ҫӗнӗ капитальнӑй строительство сарӑлса пырать, халӑх хуҫалӑхӗн пур отраҫлисем те вӑйлӑн малалла каймалла.

Производство техникин облаҫӗнче эпир нумай ҫитӗнӳсем тунӑ. Пирӗн ҫӗршыв техника тӗлӗшӗнчен кая юлса пынине пӗтернӗ, промышленноҫпа ялхуҫалӑхне кучухнехи чи ҫӗнӗ техникӑпа пуянлатнӑ.

Анчах та техника пӗр вырӑнта тӑмасть. Вӑрҫӑ, урса кайсах хӗҫпӑшалланни техника аталанӑвне уйрӑмӑнах вӑйлатрӗ. Техника аталанӑвӗнче эпир кая юлса пыма пултараймастпӑр. Паллах ӗнтӗ, туса кӑларма халиччен вӗренсе ҫитнӗ машинӑсем тума — ҫӑмӑлрах. Анчах, тума ҫӑмӑл япаласем вӗсем пурте мар лайӑх. Техникӑпа наукӑна ывӑнма пӗлмесӗр малалла ярса пырас пулать, ҫӗнӗ машинӑсем, моторсем, вооруженисем тӑвас тӗлӗшпе ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлес пулать.

Советлӑ Тӑван ҫӗршыва пӗтӗм чӗререн парӑннин туйӑмӗпе воспитани илсе ӳснӗ, хӑюллӑхпа паттӑрлӑхӑн тата совет патриотизмӗн туйӑмӗпе воспитани илсе ӳснӗ боецсен техникӑна, уйрӑмӑнах ҫар техникине — кучухнехи машинӑсен, моторсен, танксен, самолетсен техникине пур енчен те тӗплӗн вӗренсе алла илмелле. Совет ҫӗршывӗнчи кашни ӗҫсынни—социализмӑн аслӑ ҫарӗн боецӗ пулса тӑрать.

Сталин юлташ пире ҫапла вӗрентет. курӑк ӳснӗ пек пурӑнма юрамасть, —иртнине анализ тумасӑр, малашнехи ҫинчен шухӑшламасӑр, йӗритавра пӑхмасӑр пурӑнма юрамасть. Ҫынсен хӑшпӗр пайӗн ҫавӑн пек тимлӗхсӗр пулас кӑмӑл пур-ха. Ҫакӑнпа килӗшме юрамасть. Ытларах та ытларах ҫине тӑрса, ӗҫҫыннисене социализмлӑ дисциплинӑпа организованность туйӑмӗпе, хӑйсенчен тата ытти ҫынсенчен нумайрах ыйтас туйӑмпа воспитани парса пымалла.

Социализмӑн аслӑ ҫарӗнчи пур боецсене те Тӑван ҫӗршывшӑн нимӗпе те шеллесе тӑмасӑр кӗрешме пӗлес туйӑмпа, ҫапӑҫури героизм, хӑюллӑх тата паттӑрлӑх туйӑмӗпе, коммунизм тӑшманӗсем тӗлӗшпе нимӗн хӗрхенӳсӗр пулас туйӑмпа воспитани парас ӗҫе татах та ытларах ҫине тӑрса тумалла.

Коммунизм строительствин аслӑ задачисем, ҫавӑн пекех эпир пурӑнакан вӑхӑтри тӗнче обстановки пире пурсӑмӑра та татах та ытларах вӑй хурса, пӗтӗм чӗререн тӑрӑшса ӗҫлеме, хамӑрӑн ирӗке туптаса ҫирӗплетме, йывӑрлӑхсем умӗнче хӑраса ӳкмесӗр малалла пыма, тунӑ ҫитӗнӳсемпе мӑнкӑмӑлланмасӑр, лӑпланса лармасӑр ӗҫлеме хушаҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра организованность, пӗтӗм вӑя пухса ӗҫлени, кирлӗ жертвӑсене тума хатӗр тӑни—нихҫанхинчен те ытларах кирлӗ. Пӗрмаях вӗренни, татах та тепӗр хут вӗренни, харпӑрхӑйӗн опытне, ыттисен опытне тата уйрӑмӑнах вӑрҫӑ опытне тӗпчесе вӗренни кирлӗ.

Пӗр вырӑнта пӑнтӑхса тӑмалла мар, кивӗ нормӑсемпе традицисене, вӗсем кивелнӗ пулсан, ҫӗмӗрсе пымалла, вӗсене ҫӗннисемпе улӑштармалла—ҫакӑн пек ӗнтӗ кашни ленинец-сталинец тума тивӗҫлӗ ӗҫ.

Ҫаксене камран вӗренмелли, кам еверлӗ пулмалли пирӗн пур.

Пур ӗҫре те Ленин ҫулӗпе пымалла! Пур ӗҫре те Сталин ҫулӗпе пымалла! **(Алӑ ҫупаҫҫӗ).** Пур ӗҫре те Ленин пек, Сталин пек пулмалла!

Пирӗн революцине пӑвса пӑрахас тесе, халӑх ҫӗнтерсе илнӗ влаҫа унтан туртса илес тесе, унӑн ӗҫӗпе кӗрешӗвӗн ҫимӗҫӗсене туртса илес тесе, тӑшмансем мӗнле кӑна средствӑсене ӗҫе ямарӗҫ пулӗ... Советсен ҫӗршывӗнчи халӑхсем, Ленин чухнехи пекех, Сталин ертсе пынипе—хӑйсен ҫулӗпе хӑюллӑн та пӗр пӑркаланмасӑр коммунизм патнелле пыраҫҫӗ **(алӑ ҫупаҫҫӗ).**

Ҫапла малалла пырас ӗҫе кам та пулин чӑрмантарма шухӑш тытас пулсан, ун чухне, Ленин хушса хӑварнӑ пек туса, «Пирӗн вӗсене кирлӗ пек пистерес пулать, вӗсем хӑйсен ачисене, внукӗсене тата правнукӗсене: ҫавӑн пек япалана ан тӑвӑр, тесе хушса хӑварччӑр» (Ленин).

Сывӑ пултӑр ленинизм!

Сывӑ пултӑр та нумай ҫулсем хушши пурӑнтӑр Сталин юлташ! **(Алӑ ҫупаҫҫӗ, пурте ура ҫине тӑраҫҫӗ. Оркестр «Интернационал» кӗввине вылять).**



Эстони ССР столици — Таллин хули.
Ӳкерчӗк ҫинче: Эстони ССР Ҫӑмӑл промышленность Халӑх Комиссариачӗн ҫурчӗ.
Н. Янов фото-ӳкерчӗкӗ (ТАСС).

▲ ▲ ▲

Йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвне тивӗҫлипе хатӗрленмелле

СЕНТЕРВАРРИ. Хӗрлӗ Ҫар 23 ҫул тултарнӑ ятпа пулакан йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвне древтехникумра лайӑх хатӗрленсе пыраҫҫӗ. Кунта ӑмӑртӑва хатӗрленес ӗҫсене ятарласа тунӑ расписани тӑрӑх иртереҫҫӗ. Техникумри комсомолецсем пурте ӑмӑртӑва хутшӑннӑ.

Йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвне хатӗрленсе пынӑ вӑхӑтра 1-мӗш сыпӑклӑ ГТО значокӗн хӗллехи нормисене 44 ҫын, иккӗмӗш сыпӑклӑ значок нормисене 3 ҫын панӑ.

Ҫӗрйӗркелӳпе мелиораци техникумӗнче те ӑмӑртӑва хатӗрленес ӗҫре лайӑх тӗслӗхсем кӑтартрӗҫ. Унта ӑмӑртӑва 50 ҫын хутшӑннӑ. ГТО значокӗн хӗллехи нормисене 48 ҫын панӑ. Техникумра вӗренекенсем ӑмӑртӑва тӗплӗн хатӗрленсе кӗтсе илессишӗн тата малти вырӑна тухассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Ӑмӑрту ӗҫне йӗркелеме техникумсенчи физкультура преподавателӗсем: Римов, Николаев тата Прокопьев юлташсем пулӑшса пыраҫҫӗ. Вӗсем тӑрӑшса ӗҫленипе тренировкӑсем йӗркеллӗ пулса иртеҫҫӗ.

Районра йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвне хатӗрленесси ҫителӗклӗ пырать теме ҫук-ха. Ку енӗпе комсомол организацисем те ытла та начар ӗҫлеҫҫӗ. Хулари организацисен пример кӑтартса пымалла. Анчах вӗсем хӑйсем юлса пыраҫҫӗ.

Комсомолӑн МТ Станци тата райсоюз ҫумӗнчи организацисем уйрӑмӑнах начар ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак организацисенчен ӑмӑртӑва пӗр ҫын та хатӗрленмест, тренировкӑсем те иртермен.

МИКИШ ПАВАЛӖ.

Ачасен ашшӗ-амӑшӗсем шкула пулӑшаҫҫӗ

ШАХАСАН. Шӑхасанти вӑтам шкул ачасен ашшӗ-амӑшӗсемпе таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлет. Вӗсемпе пурӗ 4 хутчен пухусем ирттернӗ. Пухусенче ачасене коммунистла воспитани парасси тата шкул ӗҫне йӗркелесси ҫинчен сӳтсе явнӑ. Шкулта вӗренекен ачасен ашшӗ-амӑшӗсем паха сӗнӳсем парса хӑварчӗҫ. Ҫак сӗнӳсене пурнӑҫласа пыни вӗренӳ ӗҫне лайӑхлатма пулӑшрӗ.

Ачасен ашшӗ-амӑшӗсем шкулти ҫитменлӗхсене пӗтермелли майсене те нумай кӑтартса панӑ. Пухусенче кӑтартса панӑ ҫитменлӗхсене шкул дирекцийӗ ҫийӗнчех пӗтерсе пырать.

А. Антонов.

ҪЫРУСЕНЕ ПӐХСА ТУХНИ

Ҫуракине хатӗрленес ӗҫӗн хӑвӑртлӑхне ӳстермелле

ВКП(б) Центральный Комитечӗ партин Пӗтӗм Союзри XVIII конференцине пухасси ҫинчен йышӑнни совет халӑхӗн политикӑллӑ тата производствӑллӑ хастарлӑхне ҫӳлӗ пусӑма ҫӗклерӗ. Заводсемпе фабрикӑсенче тата транспортра кӑна мар, совхозсемпе колхозсенче те, ҫавӑн пекех машинно-тракторнӑй станцисенче те конференци ячӗпе пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑву анлӑн сарӑлса кайрӗ. Колхозсемпе бригадӑсем тата звеносем, ҫавӑн пекех уйрӑм колхозниксемпе колхозницӑсем те социализмлӑ ӑмӑртӑва массӑллӑн хутшӑнаҫҫӗ.

Кӑҫал, кирек мӗнле ҫанталӑк пулсан та, гектартан ҫӗр пӑтран кая мар тӗштырӑ туса илмелле,—ҫак ӗмӗтпе тулнӑ колхозниксен кӑмӑл-шухӑшӗсем. Темиҫе ҫӗршер звеносемпе бригадӑсем тата колхозсем хӑйсен умне татах та пысӑкрах задачӑсем лартнӑ, вӗсем кӑҫал гектартан 150, 180, 200 пӑт тӗштырӑ пухса кӗрессишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Пирӗн редакцине кашни кунах темиҫе вуншарӑн килекен ҫырусем те колхозлӑ хресченсен ӳссе пыракан хастарлӑхне, вӗсен производствӑллӑ ҫӗкленӗвне уҫҫӑн кӑтартса параҫҫӗ. Пелагея Наумова юлташ (Сталин ячӗпе тӑракан колхоз, Вӑрнар р.) хӑйӗн ҫырӑвӗнче ҫапла ҫырать:

«Манӑн звено иртнӗ ҫулта кашни гектартан 220 пӑт пухса кӗртрӗ. 1941 ҫулта гектартан 300 пӑт тӗштырӑ туса илме сӑмах паратпӑр. Халӗ вӑрлӑхсене сортласа пӗтернӗ. Удобренисем хатӗрлетпӗр, звено участокӗ ҫине юр тытса хӑвартӑмӑр».

Анна Герасимова юлташ («Колхозница» колхоз, Вӑрнар р.) гектартан 360 пӑт тӗштырӑ туса илессишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва тухнӑ. «Колхозница» колхоз иртнӗ ҫулта вӑтам шутпа кашни гектартан 20,13 центнер тӗштырӑ пухса кӗртрӗ. Ҫакӑн пек пысӑк тухӑҫлӑ тырпул пулнине колхозниксем астумаҫҫӗ, — тесе ҫырать В. Григорьев юлташ. — Колхоз вӑрлӑхсене тахҫанах сортласа тасатрӗ, вӑрлӑхсен пахалӑхӗ лайӑх. Ялхуҫалӑх машинисем те хатӗр. Колхоз ҫуракине паян тесен паян тухма пултарать. Ҫураки планне ҫирӗплетнӗ, ӑна кашни бригадӑна ҫитерсе панӑ. Ака вӑхӑтӗнче камӑн мӗнле ӗҫре пулмалли пуриншӗн те паллӑ. Сӑмахран, колхозра сеялкӑсем иккӗ, вӗсемпе П. Алексеевпа П. Шмыков юлташсем ӗҫлеҫҫӗ.

Колхозниксем виҫӗ пин лав ытла торф хатӗрлерӗҫ, уя 600 лав тислӗк кӑларчӗҫ, 50 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 20 центнер кӗл пухрӗҫ. Бригадӑсемпе звеносем пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ.

Ленин ячӗпе тӑракан колхоз (Тӑрмӑш ялӗ, Тӑвай р.) ҫитес ҫуракине большевикла хатӗрленет. Колхозниксем партин XVIII конференцийӗ уҫӑлнӑ тӗле ҫуракине пӗтӗмпех хатӗрленсе ҫитессишӗн кӗрешеҫҫӗ, — тет И. Корнев юлташ хӑйӗн ҫырӑвӗнче. — Колхозниксем пысӑк пахалӑхлӑ вӑрлӑх 500 центнер сортласа хунӑ. 352 гектар ҫинче юр тытнӑ, уя 2730 лав торф тата 5 пин лав тислӗк кӑларнӑ. Икӗ тонна минераллӑ удобрени кӳрсе килнӗ. Ялхуҫалӑх машинисене юсаса пӗтернӗ.

«Трудовик» ялхуҫалӑх артелӗн членӗсем те (Красноармейский р.) хӑйсен умне лартнӑ задачӑна — гектартан 100 пӑтран кая мар тӗштырӑ туса илес задачӑна пурнӑҫа кӗртессишӗн ҫине тӑрса ӗҫлеҫҫӗ. Кунта агротехникӑллӑ мероприятисен планне ытлашшипех тултарса пыраҫҫӗ. 60 лав юшкӑн кӑларас вырӑнне 850 лав кӑларнӑ. 175 гектар ҫинче юр тытнӑ, уя 1200 лав тислӗк турттарнӑ, вӑтӑр центнер минераллӑ удобренисем кӳрсе килнӗ, темиҫе вуншар центнер кӗл, чӑх-чӗп тислӗкӗ тата вырӑнти ытти удобренисене пухса хатӗрленӗ.

Чылай колхозсенче стахановла шкулсемпе агрокружоксем лайӑхрах ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Вӗсенче темиҫе пиншер колхозниксемпе колхозницӑсем вӑйлӑ тырпул мастерӗсен опычӗсене, агротехникӑн ҫӗнӗ ҫитӗнӗвӗсене вӗренеҫҫӗ. Ҫак ӗҫе ялхуҫалӑх специалисчӗсенчен нумайӗшӗ активлӑн хутшӑнчӗҫ, вӗсем хӑйсен пӗлӗвӗсене колхозниксен анлӑ массине параҫҫӗ.

Вӑрнар районӗнчи агрохимлабораторри заведующийӗ, геологипе минералоги наукисен кандидачӗ И. Афанасьев юлташ «Колхозница» ялхуҫалӑх артелӗнчи стахановла шкула ертсе пырать. Вӑл иртнӗ ҫулта та колхоза нумай пулӑшнӑ.

Шмидт ячӗпе тӑракан колхозри (Комсомольский р.) стахановла шкулта бригадирсем, звеноводсем тата стахановецсем, пӗтӗмпе 30 ҫын, вӗренеҫҫӗ. Вӗсем теорине практикӑпа ҫыхӑнтарса пыраҫҫӗ. Сӑмахран, «Вӑрлӑх тата ӑна акма хатӗрлесси» тема тӑрӑх заняти ирттернӗ хыҫҫӑн, шкулта вӗренекенсем хӑйсен звенисенче практикӑллӑ заняти туса вӑрлӑх сортланӑ. Ҫавӑн пекех практикӑллӑ занятисенче бригадирсемпе звеносен производствӑллӑ планӗсене тунӑ.

Стахановла шкул ӗҫлеме пуҫланӑранпа колхозри ӗҫсем чылаях лайӑхланчӗҫ,—тесе ҫырать В. Орлов юлташ.— Бригадӑсемпе звеносем ҫуракине лайӑхрах хатӗрленессишӗн пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Мӗнпур пек вӑрлӑхсене виҫӗ эрне каярах сортласа пӗтернӗ, ялхуҫалӑх машинисене юсаса хунӑ. Кӗрхи тырӑ акнӑ лаптӑк ҫине тата ҫуракине ҫуртри акмалли 200 гектар ҫине юр тытса хӑварнӑ. Вырӑнти удобренисене — тислӗк, кӗл, фекали, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ тата ытти удобренисене пухасси лайӑхланчӗ. Колхозниксем кӑҫал гектартан 120 пӑтран кая мар тӗштырӑ пуҫтарса кӗртме ӗмӗтленеҫҫӗ.

Калас пулать, малта пыракан колхозсем ҫуракине чӑннипех те большевикла хатӗрленеҫҫӗ, анчах чылай колхозсенче ӗҫсем самотек йӗркипе пулса пыраҫҫӗ-ха. Г. Волков пӗлтернӗ тӑрӑх, Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра (Ишлей р.) агротехника правилисене пӑсаҫҫӗ. Кунта ҫул ҫинчи лакӑм-сулӑнчӑксене тислӗкпе тултарса якатаҫҫӗ, уя тӑкакан тислӗке сапаласа пӗтереҫҫӗ. Лаша кӳлмелли хатӗрсем ҫитмеҫҫӗ, пуррисем те япӑхса кайнӑ, вӗсене юсамаҫҫӗ.

Вӑтакас-Татмӑшри колхозра (Канаш р.) ялхуҫалӑх машинисене — жнейкӑсене, плугсене, сеялкӑсене, молотилкӑсене пуҫтарса хуман, юр айӗнче тутӑхса выртаҫҫӗ,—тесе ҫырать Т. Турхан.—Хӑшпӗр машинӑсен пайӗсене кӑлара-кӑлара илнӗ. «Ку машинӑсем кирлӗ пуличчен вӑхӑт нумай-ха», —теҫҫӗ колхоз руководителӗсем. «Ҫӗнӗ ял» колхозра та (Красноармейский р.) ӗҫсем ҫавнашкалах тӑраҫҫӗ. Буденный ячӗпе тӑракан колхоз (Ҫӗрпӳ р.) руководителӗсем иртнӗ ҫулти ҫитӗнӳсемпе лӑпланса лараҫҫӗ, кунта халӗ те ҫуракине хатӗрленме тытӑнманпа пӗрех. Колхоз лашисем начар, вӗсене лайӑх пӑхса тӑрантарасси ҫине ҫителӗклӗн ҫаврӑнса пӑхмаҫҫӗ. Ялхуҫалӑх машинисене юсаман.

Ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе кая юлса пыракансене вӑхӑт кӗтсе тӑмасть. Кашни сехет хаклӑ. Колхозниксен ӳссе пыракан производствӑллӑ хастарлӑхне ертсе пырас пулать. Партин XVIII конференцийӗ уҫӑлнӑ тӗле пур колхозсем те ҫуракине тухма пӗтӗмпех хатӗрленсе ҫитчӗр.

Ытларах юр тытас тата удобренисем пухас, пысӑк пахалӑхлӑ вӑрлӑх хатӗрлес, ялхуҫалӑх машинисене юсаса ҫитерес тата ҫураки валли вӑйлӑ лашасем хатӗрлес — ҫак ыйтусем тавра мӗнпур колхозниксене мобилизацилемелле.

СОВЕТЛА ЛИТВАРА
Ӳкерчӗк ҫинче: Каунас хулинчи рабочисемпе работницӑсем Кавказа канмалли ҫуртсене каяҫҫӗ.
Д. Чернов фото-ӳкерчӗкӗ (ТАСС).

▲ ▲ ▲

Ҫуракине тимлӗн хатӗрленеҫҫӗ

ҪӖМӖРЛЕ. (Хамӑр корр.). Чылай колхозсем ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе питех те паха результатсем кӑтартаҫҫӗ. Уйрӑм бригадӑсемпе звеносем хушшинче ӑмӑртӑва анлӑн сарса пынӑ май чылай ӗҫсем турӗҫ те ӗнтӗ.

Хутарти Ленин ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Мозяков юлташ) ҫуракинче кирлӗ ялхуҫалӑх машинисене пурне те юсаса ҫитернӗ, 125 центнер чӑх-чӗп тислӗкӗ, 425 центнер кӗл пухса, плана ытлашшипех тултарнӑ. Кунсӑр пуҫне тата 860 лав фекали кӑларнӑ, ҫитес кунсенчех вӑрлӑхсене сортласа пӗтереҫҫӗ.

Халӗ колхозра кашни бригада ӑмӑртса ӗҫлет. Ир пуҫласа каҫченех колхозниксем ӗҫе кӳлӗннӗ: хӑшӗсем тислӗк пухаҫҫӗ, вӑрлӑх сортлаҫҫӗ, юр тытаҫҫӗ, щитсем тӑваҫҫӗ, теприсем вӑрманта ӗҫлеҫҫӗ. Паянхи куна колхоз минераллӑ удобренисем 520 центнер турттарса килнӗ те ӗнтӗ.

Колхозра стахановла шкул начар мар ӗҫлет. Унта 42 ҫын вӗренме ҫӳрет. 4 заняти туса ирттернӗ те ӗнтӗ. Занятисене колхозри агротехник Андреев юлташ ирттерет.

«Подборное» колхоз членӗсем те (колхоз председателӗ Ласковенков юлташ) XVIII партконференци уҫӑлнӑ тӗле ҫуракине пур енчен те хатӗрленсе ҫитессишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Халӗ ялхуҫалӑх машинисене юсаса, вӑрлӑхсене сортласа пӗтернӗ, тислӗк кӑларас плана та ытлашшипех пурнӑҫланӑ.

— Иртнӗ ҫулта эпир кашни гектартан вӑтам шутпа 17,05 центнер тӗштырӑ туса илтӗмӗр. Кӑҫал, паллах, унтан та ытларах туса илме пулатпӑр,—теҫҫӗ колхозниксем.

Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз та иртнӗ ҫулта гектартан тӗштырӑ 100 пӑт ытла туса илчӗ. Уйрӑм культурӑсем тӑрӑх татах та пысӑкрах ӳсӗмсем тунӑ. Колхозниксем кӑҫалхи ҫул тырпул тухӑҫлӑхне татах та ӳстерме пулаҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе халӗ вӑйлӑ кӗрешӳ пырать. Ялхуҫалӑх машинисене ҫителӗклӗ хатӗрленӗ, пурне те юсаса пӗтернӗ, вӑрлӑха та 100 проценчӗпех сортланӑ. Ҫитес кунсенчех тислӗк кӑларса пӗтереҫҫӗ.

Ҫуракине тӗплӗн хатӗрленни тырпул тухӑҫне ӳстерме пулӑшать. Ҫавӑнпа ӗнтӗ колхозниксен анлӑ массийӗ Пӗтӗм Союзри XVIII партконференци умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ.

Хар. ЛИСИН.

Районри вырӑнти промышленность ӗҫӗ

Кашни вырсарникун Элӗкре пасар пулать. Пасара тухакан таварсенчен пӗри вӑл—ҫӑпата. Ӑна та пулин частнӑй ҫынсем туса, илсе тухса сутаҫҫӗ. Пасарне те ҫынсем сахал пухӑнаҫҫӗ.

Мӗншӗн пасарта ҫынсем сахал тата мӗншӗн пасара ҫӑпатасӑр пуҫне урӑх нимӗнле тавар та тухмасть? Халиччене партипе совет тата суту-илӳ организацийӗсем куллен кирлӗ таварсен производствине сарса пырассишӗн сахал интересленнӗ, вӑл производствӑн продукцийӗсене пасарсене илсе тухмасӑр тӑнӑ. Унпа пӗрлех вырӑнта туса кӑларнӑ таварсем лавкасенче те сахал. Ку, пуринчен ытла, ҫавӑнтан килет: вырӑнти промышленноҫа аталантарни политикӑпа хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать, ӑна ӑнланса илеймен руководительсем ҫак ӗҫе вӑл хӑй юхӑмӗпе пулса пырасси ҫине шанса ларнӑ, тивӗҫлипе ертсе пымасӑр тӑнӑ. Вӗсен результачӗсем, юлашкинчен, акӑ ӑҫта илсе тухнӑ: районри вырӑнти промышленность хӑйӗн 1940 ҫулхи планне 73,3 процент кӑна тултарнӑ.

Вырӑнти чӗртавартан куллен кирлӗ таварсем туса кӑларас ӗҫре калама ҫук пысӑк майсемпе пачах ҫителӗксӗр уса курнӑ. Ҫириккассинче обозоремонтнӑй мастерской пур. Ҫак мастерской урапа-ҫунасем туса кӑларать, вӗсене юсать. Ҫак япаласене тума 560 кубла метр йывӑҫ хатӗрлесе хумалла пулнӑ, вӗсем ӑна пӗтӗмпе те 172 кубла метр кӑна хатӗрленӗ. Ҫакна пула мастерской урапа-ҫунасем туса кӑларас плана 21,96 процент кӑна тултарнӑ. Районри хӑшпӗр колхозсенче транспорт хатӗрӗсем ҫителӗксӗр, вӗсен ванчӑк урапа ҫунасем нумай. Ку урапа-ҫунасене вырӑнтах тума тата юсама тытӑнас чухне, колхоз председателӗсем вӗсене ытти вырӑнсенчен кӳрсе килессе кӗтнӗ, вырӑнти промышленноҫа аталантарса пырасси ҫине тӳнтерле пӑхса пынӑ.

Районра чӗртавар ресурсӗсем питех те пысӑк, вӗсем пурнӑҫра куллен кирлӗ таварсене: сӗтел-пукан, атӑ-пушмак, пиравӑр, чӳлмек тата ытти япаласене вырӑнтах туса кӑларма май параҫҫӗ. Чӗлпӗр, йӗвен, урхалӑх, вӗрен явасси нимӗнле йывӑр япала та мар. Мучала, сӳс ҫителӗклӗ. Унашкал вӗрен гаврашсене Охверкинӑри промысла артелӗ явать. Унӑн плана тултарма майсем пулнӑ ҫинчех 45 тонна вырӑнне 6,67 тонна кӑна вӗрен явса кӑларнӑ. Ҫавнашкалах ку артель атӑ-пушмак юсать, ҫӑматӑ тӗплет. Ку енӗпе те вӑл хӑйӗн производствӑллӑ планне ҫурринчен ытла тултараймарӗ. Куракӑшра пищекомбинат пур. Вӑл сӑра, квас туса кӑларать. Унпа пӗрлех ку комбинатӑн сушильнӑй цех пур, тӗрлӗрен ҫимӗҫсене типӗтсе хатӗрлеме пултарать. Апла пулин те плана 47,3 процент кӑна тултарчӗ. «Сырье ҫителӗклӗ мар», теҫҫӗ. Хӑйсем ҫителӗклӗ тарин чӗртавар хатӗрлессишӗн нимӗн те хыпӑнмаҫҫӗ. Ӑна хатӗрлеме инҫе кайма кирлӗ мар, районтах тупӑнать.

Районра тата чи кая юлса пыракан артель—райлесзаг пур. Вӑл район валли топливо хатӗрлет. Райлесзаг ку хӗлре района сивӗре лартать. Топливо хатӗрлес плана 28,54 процент кӑна тултарнӑ.

Районра 30 ҫын чӑпта ҫапаҫҫӗ. Вӗсенчен плана 90—100 процент тарин тултаракансем пӗр ҫын, 80 тата 90 процент тарин тултаракансем 3 ҫын, 80 процент тарин тултаракансем 26 ҫын шутланаҫҫӗ.

Вырӑнти промышленность ӗҫӗ тивӗҫлӗ вырӑна йышӑнса тӑраймanни, тепӗр енчен, артельсен ӗҫне куллен тӗрӗслесе тата пулӑшса пыманнинчен те килет. Продукцисен пахалӑхӗ начар. Элӗкри ҫӗвӗ ҫӗлекен промысла артелӗ туса кӑларнӑ таварсем пӑхма лайӑх пек, тӑхӑнма тӑрсан ҫӗвӗкӗсем сӳтӗлеҫҫӗ, тӳммисем тытсанах татӑлса ӳкеҫҫӗ.

Вырӑнти промышленность артелӗсем тата предприятийӗсем 16 ҫӗрте шутланаҫҫӗ. Ҫак артельсенче тата предприятисенче ӗҫлекенсем хушшинче, каласан ӗненмелле мар, социализмлӑ ӑмӑртӑва сарса пымаҫҫӗ. Ӑмӑртса ӗҫлекен артельсем ҫукпа пӗрех.

Артельсен ӗҫӗпе ВКП(б) райкомӗпе районти Совет исполкомӗ те сахал интересленнӗ. Вырӑнти промышленноҫа вӑйлатса тата сарса пырассишӗн халиччен татӑклӑ мероприятисем туса ирттерни пулман. Вӑл ҫакӑнтан та паллӑ: 1935 ҫулта 15 колхозра вырӑнти тӑмран кирпӗчсем туса кӑларнӑ, халӗ районра унашкал кирпӗчсем туса кӑларакан колхозсем 3—4 колхозран та ытла мар.

Районри артельсем хӑйсен таварӗсене вырӑнти суту-илӳ организацийӗсем урлӑ сарас чухне хӑйсемех вӑл таварсене урӑх районри пасарсене илсе кайса, спекуляциллӗ хаксемпе сутса килнӗ. Вӑрманкассинчи обозоремонтнӑй мастерской ҫунасене Советский тата Сӗнтӗр районӗсенчи пасарсене кайса сутнӑ. Ҫавнашкалах Шураҫри промартель туса кӑларнӑ йӗкесене те урӑх пасарсене илсе тухнӑ.

ВКП(б) XVIII съезчӗ СССР халӑх хуҫалӑхне аталантарассин виҫҫӗмӗш пятилетка планӗ ҫинчен йышӑннӑ резолюцире «Ӗҫҫыннисен ӳссе пыракан потребноҫӗсене тивӗҫтерес ӗҫре пысӑк ҫӑлкуҫӗ пулса тӑракан вырӑнти промышленноҫа тата промкооперацине пур майсемпе те вӑйлатса пымалла» тесе директива пачӗ. Ҫак директивӑран тухса тӑнӑ постановлени — вӑл СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ 1941 ҫулхи январӗн 9-мӗшӗнче «Вырӑнти чӗртавартан куллен кирлӗ таварсем тата продовольстви тӑвассине ӳстермелли мероприятисем ҫинчен» йышӑннӑ постановлени пулса тӑрать. Ку постановленире вырӑнти промышленноҫа аталантарса пымалли тӗп ҫӑлкуҫӗсене палӑртнӑ. Халӗ ӗнтӗ ҫӗнӗрен артельсем, мастерскойсем уҫма, унпа пӗрлех халичченхи артельсенче продукци кӑларассине пысӑклатма майсем пур.

Вырӑнтах пулӑ хуҫалахне туса, унта пулӑ тытасси, ухутана ҫӳресси, хӑйсем тӗллӗн ӳсекен ҫимӗҫсене: ҫырласем, кӑмпасем пухасси, улма-ҫырла сачӗсем, хурт-хӑмӑр ӗрчетесси—ҫаксене организацилени ӗнтӗ вырӑнсенче апат-ҫимӗҫ продуктисене питех те нумай туса кӑларма майсем параҫҫӗ.

Районра темӗн чухлӗ юханшывсем усӑсӑр выртаҫҫӗ, вӗсене пӗвелесе пулӑ кӳллисем тумалла. Усӑсӑр выртакан ҫеремлӗ вырӑнсем нумай—унта ҫӑмӑллӑнах ҫырла пахчисем, садсем ӗрчетме пулать. Вӑрманлӑ вырӑнсем чылай,—ҫак вырӑнсенче ухутана ҫӳреме лайӑх. Ҫак питӗ кирлӗ те пысӑк ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхӗ халӗ вырӑнти парторганизацисемпе совет организацийӗсен руководителӗсен тата вырӑнти промышленноҫпа промкоопераци работникӗсен пуҫарулӑхӗнчен, ҫине тӑнинчен, вӗсен энергийӗнчен килет. Ҫапла майпа хамӑра куллен кирлӗ таварсене хамӑр патӑртах, вырӑнтах, районра туса кӑларма пултарӑпӑр. Вӑл тата йышлӑ, ҫителӗклӗ пулмалла.

Ив. МОСЕЕВ.

Духовой оркестр

Сӗнтӗрти культура ҫурчӗ духовой оркестр инструменчӗсем 4.000 тенкӗлӗх туяннӑ. Оркестрта выляма вӗренме ятарласа кружок организациленӗ. Оркестра музыка училищинчен вӗренсе тухнӑ Троицкий юлташ ертсе пырать.

Оркестрта вылякансем майӑн 1-мӗш тӗлне кружокран вӗренсе тухма тӑрӑшаҫҫӗ.

П. Яргунькин.

Чӑваш литературинчи хӑшпӗр ыйтусем пирки

Чӑваш литературине кадрсем енчен чухӑн темелле мар. Пирӗн революциччен ҫырма пуҫланӑ писательсем те пур, 10—15 ҫул каялла ҫырма пуҫланисем вуншарӑн шутланаҫҫӗ. Юлашки вӑхӑтра тата «Сунтал» журналра ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ авторсем палӑрма пуҫларӗҫ. 1941 ҫулта литература ӳсӗмӗ тата ытларах пулмалла пек туйӑнать.

Мӗн ҫинчен ҫыраҫҫӗ-ха пирӗн писательсем?

«Сунтал» журналӑн юлашки номерӗсене пӑхса тухсан, тӳррипех калас пулать, савӑнтаракан, чӗре патне пыракан произведенисем сахал тупать вулакан.

«Сунталӑн» 10-мӗш номерӗнче Василий Деферанӑн «Марье» ятлӑ калавӗ пичетленнӗ. Чӑн, калава автор вулама ҫӑмӑл чӗлхепе ҫырнӑ. Анчах паянхи кун вӑл калав мӗн парать вулакана, мӗн ҫинчен шутлаттарма пултарать? Кӗскен, калав содержанийӗ ҫакӑн пек: Эрхип, арман хуҫи ывӑлӗ, чухӑн ҫын—Тимахви пичче хӗрне, Марьене, вӑйпа вӑрласа арӑм тӑвать. Калавӑн виҫӗ чӗрӗкӗ ҫавӑнпа иртет вара. Кайран, 1926 ҫ., Эрхип, кулаксене пӗтерессине сиссе пулас, армана вут чӗртсе ҫунтарса яма тӑрать, ӑна Марье тӑрӑ шыв ҫине кӑларса парать. Марьене хӑйне Эрхип темиҫе ҫӗртен кинжалпа чикет. Марье больницӑра выртать, сывалсан больницӑнах санитаркӑна ӗҫлеме юлать, кунта вӑл хӑйсен ял ачине, врача тухма вӗренекен Палюка курать. Палюк практикӑра ӗҫлет. Юлашкинчен вӗсем иккӗшӗ те тухса каяҫҫӗ, Марье медсестрасен курсне каять.

Тепӗр номерта (11-мӗш №) Степан Алим «Таркӑнсем» ятлӑ калав пичетлесе кӑларнӑ. Кунта Григорий Александрович Тойтерек ятлӑ ҫынна вӑйпа пуян ҫын хӗрӗ Праски ҫине авлантарма хӑтланаҫҫӗ. Тойтерек вара тухса тарать. Вӑл революциччен пулнӑ. Халь Тойтерек Златоустра металлурги заводӗнче ӗҫлет.

Эпӗ кунта ҫак асӑннӑ калавсен содержанине юриех питӗ кӗскен кӑтартса патӑм, мӗншӗн тесен, ман шутпа, тӗплӗн анализ пама тивӗҫлӗ мар вӑл калавсем. Тепӗр енчен, вулакана та вуласа тухма кичем туйӑнӗ. Чӑн та, тахҫан ӗлӗк вӑйпа хӗр вӑрланӑ е вӑйпа авлантарнӑ тема литературӑра кирлӗ пулнӑ пулӗ. Ахаль мар ӗнтӗ, ун ҫинчен ҫырмасӑр юлни пирӗн пӗр писатель те ҫук. Чӑваш литератури пуҫланнӑранпа вӑл тема тӑрӑх мӗн туса пӑхман-ши пирӗн писательсем? Калав, повесть, пьеса, сӑвӑ тата темтепӗр. Вӑл шутран эпӗ хам та тахҫан пьеса ҫырса курнӑччӗ. Тӳррипех калатӑп, халь эпӗ ӑна хам та юратмастӑп, ҫынсем ыйтсан—ятне калама вӑтанатӑп. Анчах пирӗн писательсем паян та ҫав пӗр япала ҫинченех ҫырни питӗ тӗлӗнтерет, тарӑхтарать. Вӗт ҫине-ҫине ҫыраҫҫӗ, пӗрин хыҫҫӑн тепри. Чӑн, кивӗ, иртнӗ япаласем ҫинчен пӗртте ҫырмалла мар тесе каламастӑп эпӗ. Ҫырмалла вӗсем ҫинчен те. Факт историре паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать пулсан, ун ҫинчен ҫырма кирлӗ. Сӑмахран, хресченсем колхоза куҫнӑ аслӑ улшӑну ҫулнех (1929 ҫ) илер. Ҫак, пӗтӗм тӗнчешӗн паллӑ событи ҫинчен ӗмӗрсене юлакан хаклӑ произведени тума пулать. Анчах ӑна эпир чӑваш литературинче паян кунччен те тӑвайман-ха. Ҫав вӑхӑтрах пирӗн истори енчен те, паянхи кун тӗлӗшӗнчен те ним хаксӑр произведенисем ытлашшипех пур.

Нумаях пулмасть, манӑн Советский районри пӗр культурӑллӑ колхозникпа литература ҫинчен калаҫса пӑхма май килчӗ.

— Чӑваш писателӗсене вулатӑр-и, эсир?—тесе ыйтрӑм эпӗ унтан.

— Вулатӑп, анчах вӑйпа тенӗ пек,—терӗ мана вӑл.

Мӗншӗн аплине колхозник нимӗн пытармасӑрах каласа пачӗ.

— Пире, хӗр вӑрлатӑр тесе, ухмах ҫын вырӑнне ан шутлӑр эсир, кирлех пулсан— хӑвӑр вӑрлӑр, пирӗн унсӑрӑнах ӗҫ нумай.

Колхозниксем социализмлӑ ялхуҫалӑхӗнче тӗлӗнмелле ӗҫсем, нихҫан пулман ҫӗнтерӳсем тунӑ вӑхӑтра эпир, чӑваш писателӗсем, вӗсене «эсир хӗр ан вӑрлӑр!» тесе вӗрентсе ларатпӑр. Мӗн ку? Тӗрӗссипе каласан кулни пулмасть-и вӑл? Е илер рабочие, илер интеллигенцине. Неушлӗ вӗсене паянхи кун та хӗр вӑрлани интереслентерет? Совет халӑхӗ социализм никӗсне ҫирӗплетсе ҫитерсе коммунизм тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлет. Пирӗн литература ҫак ӗҫре ӑна хавхалантарса, вӑй парса тӑракан хӗҫпӑшал пулса тӑмалла. Партин 18-мӗш съезчӗ ҫынсен ӑс-тӑнне урӑхлатса ҫӗнетес задача кӑларса тӑратнине астусан, вӑл ӗҫре литература хальхи вӑхӑтра пушшех пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни питӗ уҫҫӑн палӑрать. Нихҫан пулман кун пек пархатарлӑ, чаплӑ вӑхӑт литературӑшӑн. Ҫавнашкалах писательсем те нихҫан курман хӑйсен ӗҫне ҫав тери хакланине. Ҫапах та эпир, писательсем, ҫав задачӑна пурнӑҫа тивӗҫлипе кӗртсе пыраймастпӑр.

Мӗншӗн?

Темӑсем нумай. Пирӗн ҫӗнӗ пурнӑҫри кирек мӗнле уйрӑма илсен те, тем таранах интереслӗ сюжетсем тупӑнаҫҫӗ. Ҫӗнӗ производствӑна, колхоз пурнӑҫне тӗплӗн ҫутатса паракан лайӑх произведенисем те сахал-ха пирӗн. Ҫынсем, вӗсем хушшинчи отношенисем ҫӗнелсе пынине, йӑла ыйтӑвӗсене илсен пушшех нумай ҫырма кирлӗ темӑсем. Анчах писательсенчен нумайӗшӗ шырама, тупма пӗлмеҫҫӗ вӗсене, мӗншӗн тесен массӑпа тачӑ ҫыхӑну тытмаҫҫӗ, пурнӑҫран юлса пыраҫҫӗ. Паллӑ, пирӗн писательсенчен, курортсене кайкаласа килнисӗр пуҫне, нихҫан та тухса ҫӳремен ҫынсем те пур. Производствӑри е колхозри ӗҫсене курмаҫҫӗ, пӗлмеҫҫӗ, хӑйсем ҫавах вӑл ыйтусем тӑрӑх ҫырма пикенеҫҫӗ. Теприсем тата, Деферан е Алим пек, ӗлӗкхи пурнӑҫа хӑйсем те тӗтрен кӑна чухлаҫҫӗ, ҫавах та, критиксем пурпӗрех шарламаннине кура, ҫине-ҫинех калавсем е пьесӑсем ҫыраҫҫӗ. Ҫавна пула вара, хамӑр пурнӑҫа тӗплӗн пӗлмен е унтан юлса пынӑ пирки, пирӗн произведенисем шӗвек, ӗненмелле мар, часчасах нимӗн интересӗсӗр тухаҫҫӗ.

«Сунтал журнал та, ман шутпа, ун пек писательсемпе сахал ӗҫленӗ пек туйӑнать. Кирек мӗнле тема тӑрӑх илсе пырса паччӗр, вӑл пичетлет. Анчах произведени паянхи кун вулакана мӗн пама пултарать, мӗн ҫинчен шутлаттарать—вӑл ыйтупа питех интересленмест пулас. Унтан тата, нумайӗшӗ ҫапла шутлаҫҫӗ: писатель хӑй ирӗкӗпе ҫырать, вӑл ирӗклӗ ҫын, ӑна нимӗнле сюжет та хушмалла мар, теҫҫӗ. Пӗтӗмӗшпе вӑл тӗрӗс пулсан та, журналта кун пек принципа пӗтӗмпех тытса пыма кирлӗ мар. Журнал пуринчен ытла хальхи, паянхи ыйтусене ҫутатас задача лартать пулсан, уйрӑм ыйтусем тӑрӑх хӑшпӗр писательсене хӑй ҫутатма шутланӑ ыйтусем тӑрӑх темӑсем памалла е уйрӑмӑн калаҫса пӑхмалла пек туйӑнать. Пӗр сӑмахпа каласан, «Сунтал» журналӑн пассивлӑ пулмалла мар, ҫул кӑтартса пымалла. Ҫавнашкалах, писательсен Союзӗн те ку ӗҫре хӑйӗн ертсе пырас вырӑнне вӑйлатмалла. Вӑхӑт ӗнтӗ пире ҫӗнӗ, интереслӗ тата паянхи куна тивӗҫлӗ произведенисем пама! Пустуй япаласемпе литературӑна, уйрӑмӑнах «Сунтал» журнала текех тултарма никама та ирӗк памалла мар.

Тепӗр ыйту—вӑл произведение тӗплӗн, ӗненмелле, чӑтӑмсӑр вулас килмелле ҫырасси. Ку ӗҫре те эпир кая юлса пыратпӑр. Пирӗн чылай произведенисене хӑть вула, хӑть ан вула—пур-пӗрех пӗр пек настроенипе юлатӑн. Шутлаттаракан япаласем пирӗн литературӑра сайра тухаҫҫӗ.

«Сунталӑн» 12-мӗш номерӗнче Эльгерӑн «Курортра» ятлӑ калавӗ пичетленнӗ. Чӑннипе вӑл «Авандаев» ятлӑ роман сыпӑкӗ. Эльгер тахҫантанпах ҫыракан писатель—поэт. Эльгерӑн опыт пысӑк, хӑшпӗр произведенийӗсем унӑн (сӑмахран «Хӗнхур айӗнче») вулакансем тивӗҫлипех юратакан япала пулса тӑраҫҫӗ. Эльгертан эпир ҫавӑн пек лайӑх произведенисем кӑна ыйтма пултаратпӑр. Анчах «Курортра» калава вуласа тухсан вулаканӑн шухӑшӗ пӑртак улӑшать. Ак мӗн ҫырать Эльгер: Авандаев курорта ҫитет, киле арӑмне ачисемпе хӑварать. Апат ҫинӗ хушӑра (калавра пӗрмаях апат ҫиеҫҫӗ) Клокова хӗрарӑма юратса каять. Унтан тата, ҫав Авандаевах, Светлицкая хушаматлӑ хӗрарӑма та юратма пӑхать. Мӗн пирки? Юратун сӑлтавӗ ҫук, ӑна кӑтартмасть автор. Вӗҫкӗн ҫын пулас Авандаев, ҫапла кӑна ӑнлантарма пулать ун юратӑвне. Анчах Клокова ун юратӑвне парӑнмасть, «санӑн арӑму тата ачусем пур» тет. Ак мӗнле ӑс парать вӑл Авандаева:

— Ан ман: ачусем! ачусем!.. Ачусене пӑрахас тетӗн-им? Ачасене хӗрхенмелле. Вӗсене пӑрахма сунмастӑп.

Е тата:

— Ну, Георгий Иванович!.. Георгий!.. Мӗн шухӑша карӑр эсир? Ма чӗнместӗр?.. Апла юрамасть. Ман пирки асапланма пуҫлатӑр пулсан, апла эпӗ сире курӑнма пӑрахӑп. Асту, сирӗнпе калаҫма та пӑрахӑп, пӑрӑнса ҫӳреме пуҫлӑп.

Авандаев тӑруках ӑна ӗненсе тӗрӗс ҫул ҫине кӑларнӑшӑн тавтума пуҫлать.

— Тав сире, Нонна Николаевна, мана ӳкме паманшӑн... Эсир—чӑн-чӑн совет хӗрарӑмӗ... Вӑйлӑ эсир, ӑслӑ...

Мӗнле «пуҫсӑр» ҫын Авандаев! Хӗрарӑм хирӗҫ мар пулсан, ҫемьине пӑхмасӑрах, юратать; «санӑн арӑму, ачу пур» тесен, хӑй йӑнӑшнине йышӑнса, тӳрӗ ҫул ҫине кӑларнӑшӑн тав тума пуҫлать.

Авандаев пек тулӑксӑр ҫын паян пур-и, ҫук-и—пӗлместӗп. Анчах паллӑ: Эльгерӑн «Курортра» калав ӗненмелле мар тухнӑ. Нимӗне те вӗрентмест калав, нимӗн ҫинчен те шутлаттармасть. Ҫырасса сахал мар ҫырнӑ. Ӗненмелле тата интереслӗ тӑвас тесен, мӗн те пулин кӗтмен событи туртса кӑлармалла пулнӑ. Авандаев вара ҫав событи пирки тин (сӑмахпа каланипе мар) хӑй йӑнӑшне йышӑнмалла пулнӑ. Ҫакӑн пек япалана тупма пӗлменни калав хакне пӗтӗмпех пӗтерсе хунӑ. Тен, автор ӑна романӑн ытти сыпӑкӗсенче кӑтартнӑ. Тен, пӗтӗмӗшпе роман лайӑх та пулӗ, ӑна эпир халӗ пӗлместпӗр. Анчах апла пулсан ыйтас килет: нимӗне вӗрентмен сыпӑка мӗншӗн уйрӑмӑн ҫапса кӑлармалла пулнӑ?

Ҫавӑн пек. Пирӗн писательсем часчасах ҫиелтен, переживанисӗр ҫырма юратаҫҫӗ. Геройсем хӑйсем ӑрасна, автор хӑйне уйрӑм. Ҫапла ҫырнинчен нихҫан та вулакана интереслентерекен япала тухмасть. Герой кулать пулсан—автор та култӑр, герой макӑрать пулсан—автор та хурлантӑр. Пӗр сӑмахпа каласан, авторӑн герой телейӗсене, герой хурлӑхӗсене хӑй ҫине илме пӗлес пулать. Ҫапла тусан кӑна интереслӗ шухӑшсем ҫуралса тухма пултараҫҫӗ.

Пьесӑсем ҫинчен эпӗ шарламастӑп, урӑххисем ҫырччӑр. Ҫапах, ман шутпа, пьесӑсем те ҫав асӑннӑ калавсенчен инҫех тӑмаҫҫӗ.

Хамӑн шухӑшсемпе эпӗ литература ыйтӑвӗсене татса пама шутламастӑп, лайӑхрах произведенисем парас пирки ыйту кӑна пуҫарасшӑн. Ҫыракансем пирӗн нумай, паха произведенисем пама пултаракансем те сахал мар. Ҫав майпа халиччен тухнӑ произведенисене лайӑхрах тишкермелле, пӗр-пӗрне кӑтартмалла, вӗрентмелле, йӑнӑшсене, литературӑри пушӑ япаласене пӗр-пӗринчен вӑтанмасӑр, хӑрамасӑр сирсе пымалла.

1941 ҫулта произведенисен шучӗ анчах мар, пахалӑхӗ те ӳстӗр!

К. ПАЙРАШ.

Итали çарĕн Хĕвеланăç пушхирĕнчи (Ливири) малти чаçĕсем.
(ТАСС фото-ӳкерчĕкĕ).

Албанири вăрçă ĕçĕсем

АФИНЫ, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Греци командованийĕ январĕн 23-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă коммюникере çапла каланă: ăнăçлă операцисем туса, грексем противникăн позицийĕсене йышăннă тата икçĕр çын ытла тыткăна илнĕ, вăл шутра 8 офицер. Кунсăр пуçне, вăрçă хатĕрĕсем те туртса илнĕ.

НЬЮ-ИОРК, январĕн 24-мĕш. (ТАСС) Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çурçĕрти фронтра Греци чаçĕсем итальянецсен контратакисене сирсе пăрахнă тата çĕнĕ ялсем туртса илнĕ. Итальянецсем Клисурăран çурçĕр еннелле, Берат патнелле чакаççĕ, тесе кăтартса параççĕ.

Çав агентствах çапла пĕлтерет: Греци чаçĕсем, Англипе Греци авиацийĕ пулăшнипе, итальянецсен вăйлă контратакине хирĕç тăраççĕ. Валонăран кăнтăр енче, тинĕс хĕрринчи чи паллă çул çинче, Италин пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисем, çавăн пекех Валонăри аэродромпа порт çине бомбăсем пăрахнă. Шумшика юханшывĕн айлăмĕнче итальянецсем грексен колоннисене хирĕç виçĕ хутчен контратака тунă. Итали чаçĕсем, подкрепленисем илнĕ хыççăн, тинĕс хĕрринчи çул тăрăх темиçе километр малалла кайнă. Поградецран хĕвеланăç енче январĕн 23-мĕшĕнче ирхине грексем Инка ятлă яла илнĕ.

БЕЛГРАД, январĕн 24-мĕш. (ТАСС) «Политика» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Химарăран çурçĕр енче грексем стратеги тĕлĕшĕнчен питех те паллă темиçе пункта илнĕ. Фронтăн çав секторĕсенче штыксемпе те çапăçни пулнă, çавна пула икĕ енчен те çынсем нумай пĕтнĕ.

Итальянецсем фронтăн пур секторĕсенче те контратакăсем тума пуçланă. Анчах та итальянецсен контратакисене пурне те сирсе пăрахнă. Икĕ енчен те татăклă çапăçусене хатĕрленеççĕ.

АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер каçхине Тобрука илес тĕлĕшпе тунă операцисем вĕçленнĕ. Тобрук халĕ пĕтĕмĕшпех англичансен аллинче. Италин Тобрука хӳтлесе тăнă войскисене пурне те тыткăна илнĕ е пачах пĕтерсе тăкнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа, Хĕвеланăç пушхирĕнче Англи войскисем операцисем тума пуçласан, итальянецсен (Тобрука англичансем илнĕ хыççăн) 11 дивизи пĕтнĕ. Малтанлăха илнĕ даннăйсем тăрăх, тыткăна лекнисен хисепĕ 100 пин çын шутланать. Тыткăна илнисен шутĕнче — 22-мĕш корпус командирĕ, дивизи командирĕ, икĕ генерал, пĕр адмирал тата типĕ çĕр çинчи тата тинĕс-çар вăйĕсен высший офицерĕсем чылай.

Англичансем Тубрукра 20 пин итальянеца тыткăна илнĕ.

Англи войскисем Тобрук çине генеральнăй наступлени тăвас умĕн Англи бомбардировщикĕсем ун çине 87 хутчен пырса тапăннă.

Çав агентство пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 23-мĕшĕнче Кăнтăр Африка авиацийĕ Италин Явелло (Абиссиния) аэродромĕ çине пырса тапăннă. Унта 3 самолета пĕтерсе тăкнă.

Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Сицилири аэродромсем çине вăйлăн пырса тапăннă. Комизори, Аугустри тата Катанири аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă. Англи самолечĕсем каялла пурте тĕрĕсех таврăннă.

НЬЮ-ИОРК, январĕн 24-мĕш. (ТАСС) Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисен малти чаçĕсем хальхи вăхăтра Дернăпа Мекили хушшинче, Тобрукран 160 километр хĕвеланăç еннелле тăраççĕ.

ИТАЛИ КОМАНДОВАНИЙĔН СВОДКИ

РИМ, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Стефани агентстви Итали командованийĕн çакăн пек сводкине парать: «Греци фронтĕнче разведка тăвакан отрядсен операцийĕсем вăхăтĕнче пирĕннисем çынсене тыткăна илнĕ тата автоматла хĕçпăшалсем туртса илнĕ. Пирĕн самолетсем противник войскисем çине бомбăсем пăрахнă.

Киренаикире Итали авиацийĕ противникăн мотомехчаçĕсем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Противник авиацийĕ Дерна çине пырса тапăннă.

Тобрукăн укреплени туса çирĕплетнĕ районĕн хĕвеланăç секторĕнче пирĕн отрядсем ĕнер противника вăйлăн хирĕç тăнă.

Хĕвелтухăç Африкăра, Суданри, Сомалири тата Кенири фронтра, пирĕн войскăсемпе противникăн мотомехчаçĕсем хушшинче çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн войскăсене авиаци пулăшать.

Эгейски тинĕс районĕнче январĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противник самолечĕсем Родос хули çине пырса, унта фугаслă бомбăсем темиçе бомба пăрахнă; çынсем хушшинче аманнисемпе вилнисем çук.

Германи авиацийĕн корпусĕ Мальта утравĕ çинчи базăна çĕнĕрен атакăланă».

Англи войскисен командованийĕ кăларнă коммюнике

ЛОНДОН, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи войскисен командованийĕ çакăн пек коммюнике пичетлесе кăларнă: «Ливире пирĕн войскăсем хĕвеланăç еннелле малалла кайса пыраççĕ. Эритрейăра Итали войскисем Керупа Айкотаран тухса кайнă.

Абиссинире, Тана кӳллин районĕнче. Абиссинири партизансен активлă ĕçĕсем вăхăтĕнче Итали войскисене çухату кӳнĕ.

Кенире чикĕри нумай районсенче патрульсен пысăк активлăхĕ палăрать».

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Верховнăй командовани çапла пĕлтерет: ĕнер Германи самолечĕсем Англин хĕвелтухăç çыранĕнчи пĕр портри вăрçă тĕлĕшĕнчен паллă вырăнта тăракан объектсем çине бомбăсем пăрахнă. Инçете вĕçме пултаракан самолетсем Ирландирен хĕвеланăç енче противникăн таварсемпе çӳрекен, хĕçпăшалланнă икĕ суднине (8.100 тонна) атакăласа путарнă. Тепĕр пароходĕ (5 пин тонна) çунса кайнă. Англин хĕвелтухăç çыранĕ патĕнче противник судни (12 пин тонна) çинче, бомбăсем пăрахнипе, вăйлă взрывсем темиçе хутчен те пулнă.

Сывлăшри çапăçура противникăн пĕр самолетне персе антарнă.

ЛОНДОН, январĕн 24-мĕш. (ТАСС) Çапла пĕлтереççĕ: ĕнер противник авиацийĕ хĕвелтухăç Англи çыранĕнче виçĕ пункт çине бомбăсем пăрахнă. Икĕ пунктра çуртсене çĕмĕрнĕ. Темиçе çын аманнă.

Лондонра тăваттăмĕш каç ĕнтĕ сывлăшран тапăнни çинчен пĕр тревога та пулман. Январĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле самолетсем пырса тапăнни çинчен çĕршыври ытти районсенчен те пĕлтермен.

Вăрçă тунă сиенсем

БЕРЛИН, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Трансоцеан агентстви Бельгин хуçалăха ура çине тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен генеральнăй комиссарĕн отчетне парать. Çав отчетри даннăйсем тăрăх, пĕтĕм Бельгийĕпе хальхи вăхăтра çуррине е пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă çуртсем 37.000, фабрикăсемпе заводсем предприятийĕсем 1.300 тата обществăллă çуртсем 1.000 çурт шутланаççĕ. Вĕсене йăлтах вăрçă вăхăтĕнче çĕмĕрсе тăкнă. Кунсăр пуçне, кăштах сиен тунă çуртсем 136 пин çурт шутланаççĕ.

США правительстви СССР тĕлĕшпе тунă „моральнăй эмбаргона“ пăрахăçа кăларни çинчен

ВАШИНГТОН, январĕн 24-мĕш (ТАСС). США правительстви СССР тĕлĕшпе тунă «моральнăй эмбаргона» пăрахăçа кăларма йышăнни çинчен государство секретарĕн заместителĕ Уэллес ССР Союзĕн США-ри полпредĕ Уманский юлташ патне çыру янипе пĕр вăхăтрах, государство департаменчĕ хаçатсем валли ятарласах заявлени панă. Заявленире çапла кăтартса панă: США президенчĕ 1939 çулти декабрĕн 2-мĕшĕнче тата государство департаменчĕ 1939 çулти декабрĕн 15-мĕшпе 20-мĕшсенче тунă заявленисенче каланисене Совет Союзĕ тĕлĕшпе пурнăçа кĕртмеççĕ. Çакăнта кăтартнă документсенче США правительстви Америкăри промышленниксене çакăн пек сĕнӳ панă пулнă: хăшпĕр çĕршывсене самолетсем, авиаци оборудованийĕсем, самолетсем тăвас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăракан тĕрлĕ материал, молибден, алюминий, плансем, патентсем, пысăк пахалăхлă бензин туса кăларма кирлĕ техникăллă информацисем ямалла мар, тенĕ. США правительствин çак распоряженийĕ США-па ССР Союзĕ хушшинчи сутуилӳ çине те сарăлнă.

США правительстви 1938 çултах Япони тĕлĕшпе «моральнăй эмбарго» тунă, ăна халĕ те пăрахăçа кăларманха.

Государство департаменчĕ 1941 çулти январĕн 22-мĕшĕнче хаçатсем валли панă заявлени тăрăх, малашне «моральнăй эмбаргора» кăтартнă материалсене США-ран ССР Союзне ăсатас ĕçе США-ри лицензисен системи тăрăх туса пыраççĕ.

ВРАЧ КАНАШĔСЕМ

Тăм илни

Хĕллехи вăхăтра тăм илни час-часах пулать. Анчах вăйсăр, чĕре чирĕпе антăраса пурăнакан çынсем ытларах шăнаççĕ. Вăй-питти çынсене чылай чух шартлама сивĕре те тăм илмест. Çакă ĕнтĕ çын ăшĕнче юн çителĕклĕ пулни тата вăл йĕркеллĕ выляни çынна тăм илесрен те сыхланине кăтартса парать. Чăн та, пурне те паллă, тăм пуринчен ытла урасене, алăсене тата хăлхана, пите, сăмсана илет. Пĕр енчен вĕсем уçă, тепĕр енчен вăл оргăнсенче юн яланах сахал. Унтан тата тăвăр кăçат, атă, алса тата ыт. те, юн çаврăнăшне чăрмантарса, тăм илме пулăшаççĕ. Çавнашкалах, ура-алă йĕпе е нӳрĕ пулсан та çынна час тăм илет. Калас пулать, ал-ура пĕрмай нӳрĕ е тарласа çӳрени, хеллехи вăхăтра, çине-çине шăннипе, урăх чире те яма пултарать. Ун пек чух (пур чух та мар) ӳтри нервăсем пăсăлнипе ал-урана йывăр сурансем (трофика язвисем) тухма пултараççĕ. Юлашкинчен, сивĕ çанталăкра çул çине ĕçсе тухнин сиенĕ çинчен каласа хăвармалла. Халăх хушшинче ун пек тăвакансем сахал мар, вĕсен шучĕпе, эрех тăм илесрен сыхлать имĕш. Анчах вăл пĕртте тĕрĕс мар. Чăн, ӳсĕр çын хăй шăннине сисмест, анчах вăл эрех «ăшăтнипе» мар, пуç тăнĕ туйми пулнă пирки сисме пăрахать. Ӳсĕр çын урă çынтан ытларах шăнать. Ӳсĕрпе хытă тăм илтерсе, кайран алли-урине татмалла пулнă çынсем тата шăнса вилекенсем те пулаççĕ. Урă çын шăнма пуçласан чупса е ал-урисемпе урăх майпа ытларах ĕçлесе хăйне ăшăтма пултарать пулсан, ӳсĕр çын ун вырăнне часрах çывăрса каять.

Çапла ĕнтĕ, тăм илесрен сыхланас тесен, çул çине урă тата ăшă, аслă тумтир тăхăнса тухмалла. Шартлама сивĕре уçă вырăнсене (пит-куçа) хур çăвĕпе сĕрсе тухни тăм илесрен сыхлама пултарать. Урасене чăлха е тăла çинчен хаçат хучĕпе тĕркени те питĕ усăллă. Пуринчен ытла апла тума атăпа çӳрекен çынсене сĕнмелле.

Тăм илни виçĕ тĕрлĕ пулать: 1-мĕш степень — ӳт шуралса ларать, ыратнине туймасть, пăртак тăртанать. Кун пек тăм илни нумай чух ахалех, нимĕн тумасăрах иртсе каять. II-мĕш степень — хытăрах е ытларах шăнсан пулать. Тăм илнĕ паллăсем малтанхи, I-мĕш степеньри пекех. Çын малтан нимĕн те сисмест. Анчах кайран, ăшă çĕре кĕрсен, темиçе сехетрен, талăкран, тăм илнĕ вырăна шывлă хăмпусем тухса пĕтеççĕ. III-мĕш степень — чи хытă, йывăр тăм илни шутланать. Кун пек чухне оргăн тымарĕсем, пăсăлса юн пыма чарăннипе, çĕрсе каяççĕ, татăлса ӳкеççĕ. Анчах, астăвас пулать, кунта та ӳт çĕрни малтан паллă пулмасть, кунсем иртсен тин палăрма пуçланать. Малтан, çынна кирек мĕнле степеньпе тăм илсен те, вăл ӳт хытса, шуралса ларнине тата туйми пулнине кăна сисет. Çавăнпа хăш степеньпе тăм илнине малтанах никам та каласа пама пултараймасть. Çакăнтан ĕнтĕ тăм илнине ӳкерме пĕлесси тухса тăрать. Кирек мĕнле степеньпе тăм илсен те, ăна сивĕ çĕрте юрпа вараласа ӳкермелле. Тăм илсен тăрук ăшă çĕре кĕмелле мар. Мĕншĕн тесен тăм илнĕ оргăна ăшăтни тăм илнĕ вырăнти юн çаврăнăшне сасартăк пăсса хурать. Çапла вара çăмăл тăм илниех йывăр степень çине куçма пултарать. Нумайĕшĕ ун пек чух та тата тăрукках хур çăвĕ сĕрме тăрăшаççĕ. Капла тунин усси çук, вăл сиен кăна кӳрет. Çу тăм илнине ӳкермест, ӳте çемçетет кăна. Астăвас пулать, тăм илнине малтан ӳкерме тăрăшмалла. Ăна васкамасăр, майĕпе ӳт хĕрелсе çитиччен тумалла. Ӳт хĕрелсе çитни вара тăм илнĕ вырăнта юн çаврăнăшĕ йĕркеленсе кайнине пĕлтерет. Вăл оргăн вара сывалать. Çакăн хыççăн вара хур çăвĕ сĕрме те юрать.

Ал-урасене тăм илсен, малта кăтартнă пек ӳкернĕ хыççăн, вĕсене çӳлелле туса выртма тăрăшас пулать, çапла туни юн çаврăнăшне хăвăртрах йĕркеленме пулăшать. Тăм илнĕ вырăна вена юнĕ пухăнса ларать, артери юнĕ пыма чарăнать. Ал-урасене çӳлелле туса выртсан çав усăсăр пухăнса тулнă вена юнĕ вăл вырăнтан çăмăллăн тухса пĕтет, вара артери юнне пыма та çăмăл пулать.

Тăм илнĕ вырăна кайран шыçасран, пӳрленесрен сыхлама пĕлмелле. Çавăнпа та вĕсене таса мар япаласемпе çыхса хума юрамасть. Пӳрленнине сиссен врачсем каланă имçамсене кăна сĕрмелле. III-мĕш степеньпе тăм илнине килте сыватма çук. Çавăнпа та ун пек чух, сивĕре нумай вăхăт пулнă тата хытă тăм илтернĕ çынсене, çийĕнчех çывăхри больницăсене е фельдшер пункчĕсене ăсатма тăрăшмалла.

К. П.

РУМЫНИРИ СОБЫТИСЕМ

БЕЛГРАД, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Белградри «Вече», «Политика», «Правда» тата ытти хаçатсен корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Румынири шалти политикăллă лару-тăру питех те çивĕчленсе кайнă, çакă вăл железногвардеецсен групписен выступленийĕсене пула пуçланнă. Январĕн 20-мĕшĕнче Бухарестра тата çĕршывăн ытти центрĕсенче железногвардеецсен пысăк демонстрацийĕсем пулса иртнĕ. Демонстрацисене 20 пин çын ытла хутшăннă. «Вече» хаçат корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, демонстрантсем Антонескуна отставкăна тухма тата пĕтĕмĕшпех легионерсенчен тăракан правительство туса хума ыйтнă. Железногвардеецсен пăлханăвĕсем январĕн 21-мĕшпе 22-мĕшĕнче те чарăнман. Железногвардеецсем обществăллă чылай çуртсене хăйсен аллине çавăрса илнĕ.

НЬЮ-ИОРК, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Белградри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бухарестра железногвардеецсемпе Румыни çарĕ хушшинче чылаях пысăк тытăçусем пулса иртеççĕ. Бухарестра çӳрекен хыпарсем тăрăх, Антонеску вăрçăллă диктатура туса хума тăрăшать. Çав сведенисем тăрăхах, юлашки уйăх хушшинче железногвардеецсем секретлă арсеналсем хатĕрленĕ тата хăйсен организацийĕн членĕсене винтовкăсемпе, пулеметсемпе, алăпа ывăтса пемелли гранатăсемпе хĕçпăшаллантарнă пулмалла, тесе шутлаççĕ.

БУХАРЕСТ, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Вунсакăр сехетре Бухарестри радио генерал Антонеску халăха чĕнсе каланине вуласа панă. Çĕршыв, тенĕ вăл обращенире, «çак кунсенче йывăр сехетсем пурăнса ирттерчĕ». Восстани пуçланă çынсем министрсен совечĕн çурчĕ çине тата правительствăн ытти çурчĕсем çине пăшалсенчен пенĕ. Çакна пула Румыни çарне ĕçе ямалла пулса тăнă.

Çакăн хыççăн Бухарестри радио Антонескупа шалти ĕçсен министрĕ Попеску хĕçпăшал таврашне обязательнăй йĕркепех влаçсене парасси çинчен тата пухусем тума чарасси çинчен кăларнă чрезвычайлă декрета панă. Хĕçпăшалсене 24 сехет хушшинче пама хушнă.

Кунсăр пуçне, шалти ĕçсен министрĕ приказ пичетлесе кăларнă. Приказра çапла каланă: «Легионерсем хушшинчи йăнăш тунă элементсем» халĕ капитуляци тунă. Çĕршывра йĕркесĕрлĕх пуçласа янă çынсене арестлесе суда параççĕ, тенĕ.

БУХАРЕСТ, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Румыни телеграф агентстви çапла пĕлтерет: ĕнер генерал Антонеску Румыни халăхне чĕнсе çĕнĕ воззвани кăларнă. Воззванире çапла каланă: «Темĕн чухлĕ вăй хунă пулсан та, пăлхавçăсене йĕркене кĕртме май килмен-ха». Пăлхавçăсен группи, тенĕ воззванире, пулеметсемпе тата тупăсемпе хĕçпăшалланнăскер, министрсен совечĕн резиденцийĕ çине, çавăн пекех правительствăн ытти учрежденийĕсем çине пенĕ. Çав пулеметсемпе тупăсене шалти ĕçсен министрĕ пулнă çын правительствăна вăйпах сирпĕтсе пăрахас тесе, малтанах хатĕрлесе хунă пулнă. Пăлхавçăсене хирĕç кĕрешме çара ĕçе янă.

Çав агентствах çапла пĕлтерет: генерал Антонеску çарсене панă приказра, Румыни çарĕ хутшăннипе «йĕркелĕх туса хунă», тенĕ.

Румыни влаçĕсем кăларнă распоряжени тăрăх, çĕршывра пур çĕрте те пухусемпе митингсем тума чарнă.

БЕЛГРАД, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Югослави чиккинчен пынă çынсем çапла пĕлтереççĕ: январĕн 23-мĕшĕнче Румынипе Югослави хушшинче поездсем çӳреме чарăннă. Румынирен Югославине юлашки поездпа пынă пассажирсем: çĕршыври йĕркесĕрлĕх халĕ те чарăнман, тесе каласа параççĕ. Пысăк мар хуласемпе местечкăсенче, çар гарнизонĕсем çук вырăнсенче, пăлхавçăсем влаçа хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ.

Журналистсем хушшинче çапла пелтереççĕ: Тимишоара хулинчи урамсенче çапăçусем пыраççĕ. Войскăсен пĕр пайĕ пăлхавçăсем енне куçнă. Анчах та çарăн пысăкрах пайĕ легионерсен пăлхавне путарса лартас тĕлĕшпе кĕрешет.

НЬЮ-ИОРК, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, восстани пуçланă легионерсем Бухарестпа Брашоври радиостанцисене, Бухарестри, Плоештири тата Браилăри почтамта тата обществăллă ытти темиçе çурта хăйсен аллине çавăрса илнĕ.

Румынире пурĕ 2 пин çынна вĕлернĕ. Бухарест тулашĕнче тата уйрăмăнах Трансильванин Румыни аллинчи пайĕнче халĕ те кĕрешӳ пырать. Железногвардеецсем Арад, Тимишоара хулисене тата Трансильванири пысăк мар тăватă хулана хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ.

Юнайтед пресс агентствин Будапештри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Румынире халĕ те йĕркелĕх туса хурайман-ха. Румынири радио халăха полицин Бухарестри главнăй управленийĕ çывăхне пыма чаракан приказа вуласа панă. Генерал Антонеску радио тăрăх панă заявленире çапла кăтартса панă: эпĕ управлени системине çĕнĕлле йĕркелеме тата железногвардеецсен руководителĕпе Хориа Симапа компромис тума килĕшетĕп, тенĕ.

Железногвардеецсем Румыни çарне чĕнсе калани

БУХАРЕСТ, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Паян Румынири пĕр радиостанци, восстани пуçланă железногвардеецсем туртса илнĕ радиостанци пулмалла, Румыни çарне çапла чĕнсе каланă: железногвардеецсем хушшинче вилнисемпе аманнисем пур, анчах та железногвардеецсем хĕçпăшала пăрахмаççĕ. Вĕсем салтаксене çапла чĕнсе калаççĕ: восстани пуçланă çынсем çине ан перĕр.

Румынири событисем çинчен Германире мĕн калаççĕ

БЕРЛИН, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Берлинри журналистсем хушшинче Румынири лару-тăру çинчен хĕрӳллĕн сӳтсе-яваççĕ. Румынири событисем пирки хаçатсенче нимĕнле пĕлтерӳ те çук. Ютçĕршывсен корреспонденчĕсем паян Германири çынсем хушшинче Румынире мĕн пулса иртни çинчен пĕлме тăрăшнă. Германи енчен журналистсене çапла пĕлтернĕ: «Çĕршыври обстановка халĕ те тĕплĕн палăрман-ха. Юлашки вăхăтра Румыни йывăр кризис тӳссе ирттернĕ, çавăнпа та унта йĕркелĕх туса хума çăмăл мар. Антонеску хăйĕн авторитетне çирĕплетме тăрăшать. Ăна тума легионерсен партинчи хăшпĕр элементсем чăрмантараççĕ. Германия шанса тăрать, йывăрлăхсем пур пулсан та, Антонеску государствăра хăйĕн авторитетне çирĕплетме пултарĕ. Румынире пулса иртекен событисене Германипе Румыни çарĕсем хутшăнмаççĕ».

Германире ĕçе пĕлекен çынсем Румынири событисем çинчен тĕплĕн пĕлтереççĕ. Легионерсен руководителĕ Хориа Сима государство руководстви пирки Антонеску умне чылай требованисем лартнă. Антонеску вăл требованисене йышăнман тата, Хориа Симан легионерсен движенине ертсе пырас ĕçе пăрахмалла, тесе требовани кăларса тăратнă. Легионерсене ертсе пырас ĕçе Антонеску хăй çине илесшĕн пулнă. Çакна пула ĕнтĕ Антонескупа Хориа Сима майлă тăракан çынсем хушшинче кĕрешӳ пуçланнă. Кĕрешӳ Бухарест урамĕсенчи хĕçпăшаллă тытăçусем çине куçнă. Вилнисемпе аманнисем те пур.

Çав çынсем хушшинчех пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Хориа Сима таçта пытанса пурăнать. Антонеску отрячĕсем ăна шыраса тупма тăрăшаççĕ. Румынипе чылай державăсем хушшинче телефонлă çыхăну татăлнă. Паян тата çапла пĕлтернĕ: Германин Братиславăри посланникĕ пулнă Киллингер, Бухарестри посола лартнăскер, хальхи вăхăтра Румынине кайма тухнă.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Хунань провинцийĕн (Центральнăй Китай) çурçĕр пайĕнче Япони войскисем январĕн 20-мĕшĕнче Иочжоу патĕнче Янцзы юханшывĕ урлă каçма хăтланнă. Авиаци пулăшнипе Япони войскисен пĕр пайĕ çав юханшывăн çурçĕр енне каçнă. Анчах японецсене китаецсем хупăрласа илнĕ те, йăлтах пĕтерсе тăкнă.

Январĕн 21-мĕшĕнче Япони войскисем Тайху кӳллин хĕвеланăç хĕрринче (Цзянсу провинцийĕн кăнтăр пайĕ) китаецсен позицийĕсене атакăланă. Китаецсен каялла чакмалла пулнă. Тепĕр кунне китаецсем, подкрепленисем илнĕ хыççăн, японецсене атакăланă, вĕсене хăйсен позицийĕсенчен хĕссе кăларнă. Японецсен 500 çын ытла вилнĕ, вĕсем каялла чакнă.

Хубэй провинцинче Япони канонеркипе çар транспорчĕ, Янцзы юханшывĕ тăрăх пыраканскерсем, мина çине пырса тăрăннă. Карапсем путнă. Çынсем чылай пĕтнĕ.

Çурçĕрпе Кăнтăр Китайри фронтсенчи ĕçсем çинчен сведенисем çук.

* * *

Январĕн 23-мĕшĕнче Японин темиçе бомбардировщикĕ Куньмин çине (Юньнань провинцийĕ) çĕнĕрен пырса тапăннă.

Январĕн 24-мĕш. (ТАСС).

Совет влаçĕ туса хунă хыççăн Литвара социальнăй страхованине, медицина енĕпе тӳлевсĕр пулăшу парассине пурнăçа кĕртнĕ. Ачасем валли çĕнĕрен вуншар яслĕсемпе садсем, поликлиникăсем, амбулаторисем, ача çуратмалли çуртсем т. ыт. уçаççĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Каунас хулинчи ачасен 1 мĕш №-лĕ çĕнĕ яслинче.
Д. Чернов фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

▲ ▲ ▲

Профсоюзсен йĕлтĕрлĕ кросне январĕн 30-мĕшчен тăснă

Профсоюз организацийĕсемпе ирĕклĕ спорт обществисем ыйтнă тăрăх, ВЦСПС секретариачĕ профсоюзсен Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрлĕ виççĕмĕш кросне январĕн 30-мĕшчен тăсма йышăннă.

Комсомолецсен Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă ятпа пулмалли Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрлĕ кросне пысăк вырăна хурса, ВЦСПС секретариачĕ профсоюзсен центральнăй комитечĕсене тата ирĕклĕ спорт обществисене кроса ирттерес ĕçре комсомол организацийĕсене пур майсемпе те пулăшу пама хушнă.

Ăмăртусен кунĕсенче профсоюз организацийĕсем кросс участникĕсене йĕлтĕр инвентарĕсене тӳлевсĕр пама тивĕçлĕ. Кунсăр пуçне, профсоюзсем ăмăртусене организацилеме тата ăмăртусенче судьясем пулма спорт обществисен работникĕсемпе физкультурник-общественниксем уйăрса пама тивĕçлĕ. (ТАСС).

Йĕлтĕрçĕсен бригадисем

«Восход» спорт обществин Чăваш Совечĕ комсомолецсен Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă ятпа иртекен йĕлтĕрлĕ кросне хатĕрленес çĕрте физкультурăн вырăнти коллективĕсене пулăшма чи лайăх йĕлтĕрçĕсен бригадисене районсене ярать. Вăл бригадăсем Ишлей, Красноармейский тата Шупашкар районĕсенчи вырăнти коллективсенче пулаççĕ.

Физкультурăпа спорт ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕ «Восход» обществин пуçарăвне ырласа, ытти спорт обществисене çавăн пек бригадăсем организацилесе, вĕсене районсене ярса вырăнти коллективсене практикăллă пулăшу пама хушнă.

Çар ĕçне вĕренеççĕ

СЕНТЕРВĂРРИ. Районри партипе совет активĕ çар ĕçне вĕренме тытăнчĕ. Вĕренекенсене тăватă группăна уйăрнă. Кашни группăн командир, политрук пур. Занятисем кашни эрнере пĕрре пулса иртеççĕ. Партипе совет активĕ çар ĕçне тăрăшса, интересленсе вĕренет.

Иккĕмĕш группа çар ĕçне вĕренессине лайăх организацилес шутпа пĕрремĕш группăна социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ.

Г. Закамский.

Лекци

Ыран, январĕн 27-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче ВКП(б) историйĕ çинчен вулакан лекцисен циклне итлекенсем валли **«Работа В. И. Ленина «Что такое «друзья народа» и как они воюют против социал-демократов»** темăпа тӳлевлĕ лекци пулать. Лектор — **Суслов** юлташ.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать. Итлеме абонементпа кĕртеççĕ.

ПАРТКАБИНЕТ.

Ответлă редактор Р. О. МАЛЮТИН.

Управление Землеустройства Наркомзема Чувашской АССР
ПРОИЗВОДИТ
НАБОР СЛУШАТЕЛЕЙ
НА 8 МЕСЯЧНЫЕ КУРСЫ ПРИ МАРПОСАДСКОМ ТЕХНИКУМЕ ЗЕМЛЕУСТРОЙСТВА.
Курсы готовят техников-с'емщиков для землеустроительных работ.

На курсы принимаются лица, имеющие образование не ниже семи лет.

Лица, желающие поступить на курсы, должны подавать заявление в Управление Землеустройства с приложением следующих документов: 1) Справку об образовании, 2) справку о рождении, 3) справку о состоянии здоровья, 4) две фотокарточки размером 3х4, 5) документ об отношении к воинской обязанности представляется лично.

Заявления принимаются до 1 февраля с. г.
Начало занятий на курсах 1 февраля с. г.
Принятым на курсы будет сообщено особым извещением.
Адрес для подачи заявлений: г. Чебоксары, Чувашская АССР, ул. Карла Маркса, д. № 7, Управление Землеустройства НКЗ ЧАССР.
Управление Землеустройства.

2—1

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Еçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2203.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 2. Ф. Б. 9Х84 п. л.